Чебоксарская
Ц. Б. им. Горького
6

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1938
февралӗн
26
шӑматкун
46 (4859)-мӗш №

ЧӐВАШ КОММУНӖ

20-мӗш ҫул тухать ● ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Тӗпӗҫтӑвкомӗн хаҫачӗ ● Пӗр №-рӗ 10 пус

РЕДАКЦИПА КАНТУР АДРЕСӖ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 6, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторӑн [illegible]
Ред. заместителӗн [illegible]
Редакци секретарӗн [illegible]
Дежурнӑйӑн [illegible]

Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗн командирсемпе начальниксен составне ССР Союзӗн орденӗсемпе наградӑлана

Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗпе Тинӗс-Ҫар Флочӗ ҫирӗм ҫул тултарнӑ май, совет влаҫӗн тӑшманӗсене хирӗҫ пынӑ ҫапӑҫусенче паттӑрлӑх кӑтартнӑшӑн тата хӑйсене пӗр шеллемесӗр ҫапӑҫнӑшӑн, ҫавӑн пекех тата Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗн чаҫӗсенче тата подразделенийӗсенче ҫар ӗҫне, политикӑна тата техникӑна вӗренес тӗлӗшпе калама ҫук чаплӑ ҫитӗнӳсем тунӑшӑн ССР Союзӗн Аслӑ Совет Президиумӗн указӗпе командирсене, политработниксене, начальниксене тата красноармейцӑсене пурӗ 1.057 ҫынна орденсемпе наградӑлана.

Ленин орденӗпе: Климент Йефремович Ворошилов—Совет Союзӗн Маршалӗ, Иван Федорович Федько—пӗрремӗш рангри командарм, Лев Захарович Мехлис—иккӗмӗш рангри ҫар комиссарӗ, Йефим Афанасйевич Шчаденко—иккӗмӗш рангри ҫар комиссарӗ, Василий Константинович Блюхер—Совет Союзӗн маршалӗ, Семен Константинович Тимошенко—иккӗмӗш рангри командарм, Григорий Иванович Кулик—иккӗмӗш рангри командарм, Михаил Семенович Хозин—комдив, Максим Петрович Магер—комкор, Михаил Григорйевич Йефремов—комкор, Всеволод Федорович Йаковлев—комдив, Степан Иванович Дудко—капитан, Андрей Иванович Йеременко—полковник, Иван Семенович Злыгостев—лейтенант, Владимир Дмитриевич Крӳченкин—майор, Василий Петрович Кузнецов—пӗрремӗш рангри ҫар инженерӗ, Петр Михайлович Кучма—аслӑ лейтенант, Иван Константинович Нечайев—лейтенант, Андрей Василйевич Новиков—аслӑ лейтенант, Алексей Федорович Орлов—иккӗмӗш рангри ҫар врачӗ, Степан Михайлович Тимохин—лейтенант, Иван Семенович Тройан—иккӗмӗш рангри ҫар инженерӗ, Дмитрий Максимович Чумаков—капитан, Йаков Сергейевич Шаробурко—полковник йулташсене наградӑлана.

„Хӗрлӗ Йалав" орденӗпе 369 ҫынна наградӑлана, вӗсен шутӗнче: Александр Дмитрийевич Локтионов—иккӗмӗш рангри командарм, Василий Герасимович Кольцов—бригадӑ комиссарӗ, Леонид Григорйевич Петровский—комкор, Владимир Йаковлевич Качалов—комдив, Михаил Антонович Антонюк—комкор, Павел Кузьмич Смирнов—дивизи комиссарӗ, Иван Карпович Николайев—дивизи комиссарӗ, Илья Корнилович Смирнов—комкор, Филипп Афанасйевич Йершаков—комдив, Георгий Павлович Сафронов—комкор тата ыттисем те.

„Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр" орденӗпе 298 ҫынна наградӑлана. Вӗсен шутӗнче: Борис Михайлович Шапошников—пӗррӗмӗш рангри командарм, Карп Лукич Пантас—дивизи комиссарӗ, Петр Тимофейевич Алесин—аслӑ лейтенант, Николай Николайевич Аничков—дивврач, Александр Петрович Андрейев—полковник, Йевгений Сергейевич Андрейев—дивинженер, Константин Иувенальевич Андрейев—капитан, Петр Николайевич Ахлюстин—полковник, Павел Йегорович Багайев—майор, Вартан Григорйевич Багдасарйан—капитан тата ыттисем те.

„Знак Почета" орденӗпе 365 ҫынна наградӑлана. Вӗсен шутӗнче: Николай Прокофйевич Агальцов—виҫҫӗмӗш рангри интендант Григорий Николайевич Адамий—политрук, Николай Иванович Аксенов—пӗрремӗш рангри техник-интендант, Сергей Григорйевич Алгасов—пӗрремӗшӗ рангри интендант, Андрей Никандрович Анисимов—иккӗмӗш рангри ҫар инженерӗ, Макар Андрейевич Анкудинов—политрук, Михаил Алексейевич Арлюков—красноармейец, Михаил Иванович Андрӳхин—виҫҫӗмӗш рангри интендант, Федор Александрович Бабенко—красноармейец, Хаджи-Ахмет Рамазанович Бабкайев—красноармейец тата ыттисем те.

(ТАСС).

„Вӑрҫӑн мӗн пур провокаторӗсен аҫа-ҫиҫӗмӗ"

Йутҫӗршыв пичечӗ Хӗрлӗ Ҫарпа флот 20 ҫул тултарни ҫинчен

Йутҫӗршыв пичечӗ ССР Союзӗн Ҫарӗпе Тинӗс-Ҫар флочӗ 20 ҫул тултарни ҫинчен нумай ҫырать. Франци, Чехословаки, Китай тата республикӑлӑ Испани хаҫачӗсем февралӗн 23-мӗшӗнче йубилейе ҫутатса ҫырнӑ статйасем пичетлесе кӑларнӑ.

Китайӑн „Дагунбао" йатлӑ хаҫачӗ умстатйара: „Хӗрлӗ Ҫар 20 ҫул тултарнӑ кун ССР Союзӗн халӑхӗсем ҫав ҫулсем хушшинче никам ҫӗнтерейми Хӗрлӗ Ҫар тума ҫирӗп вӑй хунине хисеплемесӗр тата унпа тӗлӗнмесӗр тӑма пултараймастпӑр,—тесе ҫырнӑ.

Норвегин „Арбейдерен" йатлӑ хаҫачӗ ҫапла ҫырать: „Совет халӑхӗ хӑйӗн ҫарӗ ҫине кӑтартса: вӑл, пӗтӗм тӗнчери чи организациллӗ, чи вӑйлӑ ҫар пулса тӑрать, вӑл, чи малтанах, салтакӗсем те, ҫавнашкалах тата Хӗрлӗ Ҫар командирӗсен состав те хӑйсем социализм тата лӑпкӑ самана ӗҫӗшӗн кӗрешнине пӗлсе тӑнипе никам ҫӗнтерейми пулса тӑрать тесе мухтансах калама пултарать. Хӗрлӗ Ҫар вӑрҫӑн мӗн пур провокаторӗсемшӗн аҫа-ҫиҫӗм пулса тӑрать".

(ТАСС).

Испанири фронтсенче

Темиҫе кун хушши ӗнтӗ республикӑ чаҫӗсем Теруел патӗнче пӑлхавҫӑсене хирӗҫ паттӑрӑн тӑраҫҫӗ. Пӑлхавҫӑсем кунпа Теруел ҫине тӑваттӑмӗш хут контрнаступлени тӑваҫҫӗ. Февралӗн 21-мӗшӗнче ирхине тата кӑнтӑрла республикӑ ҫарӗсем, хӑйсен позицисене сыхласа, пӑлхавҫӑсене пысӑк ҫухатусем кӳнӗ. Пӑлхавҫӑсем кунта хӑйсен-суйласа илнӗ чи лайӑх чаҫӗсене йанӑ, вӗл чаҫсене йӑвӑр артиллери тата Германипе Италин ҫӗнӗ техникӑпа тунӑ ҫӗнӗ маркӑлӑ самольотсем нумайӑн пулӑшса тӑнӑ. Февралӗн 21 мӗшӗнче каҫхине кӑна республиканцӑсем, хӑйсен командованийӗн приказне пурнӑҫа кӗртсе, Теруел патӗнче пӑлхавҫӑсен хупӑрланине татса тухса, Теруелтен йӗркеллӗнех тухса кайнӑ.

Теруеле пӑрахса хӑварнӑ чаҫсем хӑйсен ҫӗнӗ позицийӗсенче, Теруел фронтӗнче ҫапӑҫакан ытти республикӑ чаҫӗсемпе пӗрлешсе, халь пӑлхавҫӑсене хирӗҫ ӑнӑҫлӑн ҫапӑҫаҫҫӗ.

(ТАСС).

Китай авиацийӗ Формозӑ утравӗ ҫине тапӑннӑ

Ханькоуран пӗлтернӗ тӑрӑх, Февралӗн 23-мӗшӗнче Китай авиацийӗ Йапонин Формозӑ йатлӑ утравӗ ҫине тапӑннӑ. Утравӑн тӗп хули ҫине—Тайхоку ҫине икӗ хутчен бомбӑсем пӑрахнӑ. Пирвайхи хут Китай самольочӗсем ҫӳлтен вӗҫе, Тайхокури аэродром ҫине вунӑ бомбӑ пӑрахнӑ. Тепӗр икӗ сехетрен Китай самольочӗсем аэродром ҫине ҫӗнӗрен пырса бомбӑсем пӑрахнӑ. Ҫапла вара бомбӑсем пӑрахнипе Йапонин 36 самольот йӑлтах пӗтнӗ. Вилнисемпе аманнисем 37 ҫын шутланаҫҫӗ. Аэродромра горючи склачӗ ҫунса кайнӑ.

Ҫакӑн хыҫҫӑн Китай самольочӗсем хӑйсен базисене лайӑхах таврӑннӑ.

(ТАСС).

Хӗрлӗ Ҫарпа флот йубилейне пӗтӗм ҫӗршыв уйавларӗ

Пӗтӗм совет халӑхӗ Хӗрлӗ Ҫарпа Тинӗс-Ҫар флочӗ XX ҫул тултарнине савӑнӑҫлӑн уйавларӗ. Совет ҫӗрӗн аслӑ талкӑшӗсем тӑрӑх, хуласемпе йалсенче ӗҫҫыннисем социализмлӑ тӑван ҫӗршывӑн чиккисене пӗр шиклен-месӗр сыхлакансене чӗререн йуратса саламларӗҫ. Ленинградра, Кийевра, Минскра, Тбилисире, Горькинче, Бакура, Алма-Атара тата ытти хуласенче те, фабрикӑсемпе заводсенче нумай ҫынлӑ митингсем тата чаплӑ ларусем пулса иртнӗ. Ӗҫҫыннисем ҫав митингсемпе чаплӑ ларусенче хӑйсем тухса каланисенче Хӗрлӗ Ҫарпа флота хӗрулӗн йуратнине, социализмлӑ тӑван ҫӗршыва тата халӑхсен аслӑ ҫулпуҫне Сталин йулташа „вӗҫӗмсӗр йуратнине кӑтартса панӑ.

Казахстанра чаплӑ йубилей йачӗпе йӗлтӗрпе чупакан колхозниксен республикӑри ӑмӑртувӗсене организациленӗ. Ҫав ӑмӑртусенче ҫӗр командӑ ытла хутшӑннӑ. Осоавиахим членӗсем пиншерӗн пӑшалпа тӗл пемелли ӑмӑртусенче хутшӑннӑ.

Ҫӗршыври клубсенче, вулав ҫурчӗсенче тата хӗрлӗ кӗтессенче йубилей кунӗнче калаҫусем, граждан вӑрҫинче пулнисен асаилӳсен вечӑрӗсене туса иртернӗ.

(ТАСС).

Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗн генеральнӑй штаб начальникӗ пӗрремӗш рангри командарм Б. М. ШАПОШНИКОВ йулташ патӗнче пулнӑ йышӑну

Февралӗн 23-мӗшӗнче каҫхине Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗн генеральнӑй штаб начальникӗ пӗрремӗш рангри командарм Б. М. Шапошников Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗпе Тинӗс-Ҫар флочӗ XX ҫул тултарнӑ йатпа йышӑну тунӑ.

Йышӑнура йутҫӗршывсен ҫар атташесем, Хӗрлӗ Ҫарпа Тинӗс Ҫар Флочӗн чи аслӑ командованийӗпе начальниксен составӗн представителӗсем, Совет искусствин паллӑ маҫтӑрӗсем, писательсем пичет представителӗсем пулнӑ.

(ТАСС).

Ҫӗнӗ званисем панӑ

Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗпе Тинӗс-Ҫар флочӗ 20 ҫул тултарнӑ май ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ ССР Союзӗн Тинӗс-Ҫар флочӗн Халӑх Комиссарӗн заместительне пӗрремӗш рангри флагмана П. И. Смирнова. иккӗмӗш рангри Флот флагманӗ ҫар званине панӑ.

ССР Союзӗн Тинӗс-Ҫар флочӗн Халӑх Комиссарӗн заместительне иккӗмӗш рангри флагмана И. С. Исакова пӗрремӗш рангри флагман ҫар званине панӑ.

Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗн сывлӑшри вӑйӗсен начальникне А. Д. Локтионов комкора иккӗмӗш рангри командарм ҫар званине панӑ.

(ТАСС).

„Йермак", „Таймыр" тата „Мурман" ҫинче

„Мурманец" пырассине кӗтсе Исланди ҫыранӗнчен пӗр милре йакӑр йанӑ „Йермак" пӑрҫӗмӗрен ҫинчен ҫапла пӗлтереҫҫӗ:

—Февралӗн 23-мӗшӗнче пӑрҫӗмӗрен ҫинчи ҫынсем папанинцӑ-геройсемпе пӗрле Хӗрлӗ Ҫарпа флот 20 ҫул тултарнӑ мухтавлӑ йубилейне уйавланӑ.

Чаплӑ пухура Папанин йулташ сӑмах тухса каланӑ. Ӑна пухура пулнӑ ҫынсем хӗрӳллӗ оваци туса кӗтсе илнӗ. Вӑл хӑй хутшӑннӑ граждан вӑрҫин епизочӗсем ҫинчен, партизансен Крымри похочӗсем ҫинчен каласа панӑ.

„Йермак" ҫинче ӗҫ вӗрет: карап праҫник чухнехи пек капӑрланнӑ, Ленинграда ҫитме хатӗрленет. Папанинцӑсем канаҫҫӗ, хӑйсен дневникӗсене йӗркене кӗртеҫҫӗ...

Папанинцӑсене пӑр ҫинчен илнӗ „Таймырпа" „Мурман" Мурманскри порта таврӑнаҫҫӗ. Февралӗн 24-мӗшӗнче карапсем Йан-Майенран иртсе Норвеги тинӗсне кӗнӗ те ӗнтӗ.

(ТАСС)

Ӳкерчӗкӗн ҫинче: „Йермак" пӑрҫӗмӗрекӗн капитанӗ В. И. Воронин йулташ капитан кӗперӗ ҫинче.

С Лоскутов фото-ӳкерчӗкӗ. (Союзфото „Йермак" ҫинчи спецкорӗ).

Йапони тата тепӗр провокаци тунӑ

ВЛАДИВОСТОК, февралӗн 22-мӗш. (ТАСС). Кунта Йапони влаҫӗсем ҫӗнӗ провокациллӗ ӗҫсем туни ҫинчен сведенисем илнӗ. Февралӗн 19-мӗшӗнче советӑн „Кузнецкстрой" йатлӑ груз пароходӗ, Петропавловскран Владивостока пассажирсемпе тата почта илсе кайнӑ чухне, ҫӗр кӑмрӑкӗ илме Йапонин Хакодатери портне кӗнӗ. Вӑл пароход ҫинче 35 ҫынран тӑракан командӑ тата 37 пассажир пулнӑ. Капитан тата советӑн Хакодатери консулӗ протест тунине пӑхмасӑрах, Йапонин тинӗс полицийӗ парохода тытса чарса ухтарма пуҫланӑ. Хальхи вӑхӑтра пароход командӑпа тата пассажирсемпе пӗрле арестре тӑрать. Хакодатери полиципе прокуратурӑ, следстви пырать тесе пароход ҫине консула кӗртмеҫҫӗ.

Йапони влаҫӗсем халӗ те вӑрӑхурахла ӗҫсем туни кунта пурне те тарӑхтарса йанӑ. „Кузнецкстройа" тытса чарнине пӗлсе тӑрсах черетлӗ провокаци туни пулать, тесе калаҫҫӗ. Владивостокри совет общественнӑҫӗ Йапони влаҫӗсене дипломатиллӗ ыйтни усӑсӑр пулни палӑрнӑ май совет правительстви витӗмлӗрех ответлӑ мерӑсем йышӑнать, тесе шанать. Кунта, уйрӑмӑн илсен, ҫакна кӑтартса параҫҫӗ: Йапони пароходӗсем пирӗн портсене час-часах кӗреҫҫӗ, совет пароходӗсем Йапони порчӗсене сахалрах кӗреҫҫӗ, ҫавӑнпа та хире-хирӗҫ ответлес принципа Йапони пароходӗсем тӗлӗшпе пурнӑҫа кӗртни Йапонишӗн интереслӑ марринне Йапони влаҫӗсене ӗҫре кӑтартса пама йӑвӑр мар.

Йутҫӗршывсенче

◆◆ Токиора (Йапони) ҫурт йусама укҫа ҫуккипе чи пысӑк библиотекӑсенчен пӗри хупӑнать.

◆◆ Мексикари рабочисен конфедераци сйесӗ ҫӗршыври рабочисене фашизма хирӗҫ кӗрешме организацилесси ҫинчен решени йышӑннӑ. Решенире „кирлӗ пулсан, фашизма хӗҫпӑшаллӑ отпор памала" тесе каланӑ.

◆◆ Февралӗн 23-мӗшӗнче Мадридра Хӗрлӗ Ҫарпа Тинӗс-Ҫар флочӗ 20 ҫул тултарнӑ йатпа пысӑк вечер пулса иртнӗ. Чи пысӑк кинотеатр залӗ халӑхпа тулнӑ. Вечӗрта Рафаел Альберти поэт хӑйӗн Хӗрлӗ Ҫара хисеплесе ҫырнӑ поэмине вуласа панӑ.

◆◆ Февралӗн 23-мӗшӗнче Парижре Йапони таварӗсемпе ытларах суту-илӳ тӑвакан пӗр пысӑк магазинра Йапонине хирӗҫле пысӑк демонстраци пулса иртнӗ. Магазинра виҫӗ пине йахӑн ҫын пулнӑ. Вӗсем Йапони таварӗсене бойкот тума ыйтнӑ.

◆◆ Лондонра Англипе Итали хушшинчи економикӑлӑ калаҫу пуҫланнӑ.

(ТАСС).

Германин Америкӑри посольствин пӗрремӗш секретарӗ отставкӑна тухнӑ

Нью-Йоркран пӗлтернӗ тӑрӑх, доктор Майер, Германин дипломати корпус членӗ, дипломати ӗҫӗнче вунултӑ ҫул хушши ӗҫленӗскер, Гитлер политикине хирӗҫ протест туса, Германи посольствин пӗрремӗш секретарӗн ӗҫӗсене туса пырассине хӑйӗн ҫинчен ҫирнӗ.

Майер Гитлера „Германи интересне сутакан" тесе айӑпланӑ, вӑл „Фашисла йӗрке хӗвелапӑҫ цивилизацин—тӑшманӗ пулса тӑрать",—тесе пӗлтернӗ.

(ТАСС).

Сльотра пулма тивӗҫ илнӗ трактористсем

Февралӗн 14-мӗшӗнче Шӑхасан районӗнчи трактористсен канашлӑвӗ пулса иртрӗ. Канашлу ССРС Аслӑ Совечӗн пӗрремӗш Сессйи итогӗсемпе РСФСР Аслӑ Советне суйлас ӗҫри задачӑсем ҫинчен тата трактористсен иртнӗ ҫулхи ӗҫ итогӗсемпе паллашса умра тӑракан задачӑсем ҫинчен сӳтсе-йаврӗ.

Шӑхасан районӗнче МТС организацилени шӑп икӗ ҫул тултарчӗ. Икӗ ҫул хушшинче вӑл, организаципе хуҫалӑх йенчен тӗреклӗнсе пырса, колхозсене вӑйлӑ тырпул туса илме пулӑшас тӗлӗшпе пысӑк ҫитӗнӳсем турӗ. Социализмла ӑмӑртӑва анлӑн сарса йанӑ, трактористсем хушшинче ӗҫ дисциплинине кирлӗ вырӑна лартнӑ. Ҫав май МТС хӑйӗн 1937 ҫулхи производствӑлӑ ӗҫ планне 117 процент тултарнӑ.

Уйрӑм бригадӑсенчи трактористсем чылайӗшӗ лайӑх ӗҫ пахалӑхӗшӗн ҫине тӑрса ӗҫленӗ. Ҫавна пула вӗсем хӑйсен ӗҫ планӗсене ирттерсе тултарнӑ, ҫунтармали, сӗрмели хатӗрсене перекетленӗ.

Акӑ, 1-мӗш бригадӑ хӑйӗн планне 131 процент, 2-мӗш бригадӑ 106 процент, 3-мӗш бригадӑ—120 процент, 4-мӗш бригадӑ (бригадирӗ Н. Тимофейев комсомолец) 168 процент, 6-мӗш бригадӑ (бригадирӗ Краснов) плана 157 процент тултарнӑ. Йатарласа организациленӗ хӗрарӑм трактористкӑсен бригади те хӑйӗн планне 110,5 процент тултарнӑ. Ҫав вӑхӑтрах ӗҫре начар тӗслӗхсем паракан бригадӑсем те ҫук мар.

Осипов бригади ҫулталӑк планне 80 процент, Матвейев бригади—86 процент, Долгов бригади 82 процент ҫеҫ тултарнӑ. Вӗсенче ӗҫ дисциплини начар пулнипе трактористсем ӗҫ пахалӑхӗшӗн тӑрӑшман.

Долгов бригади Киров йачӗпе тӑракан колхозра авӑн ҫапнӑ хыҫҫӑн, вӑл ӗҫе тепӗр хут тумала пулни те ӑнсӑртран пулман.

Трактористсем 10 тонна ҫунтармали йапаласене перекетлесе, государствӑна 47 пин тенкӗ тупӑш панӑ. Ку тӗлӗшпе уйрӑм трактористсем лайӑх тӗслӗхсем кӑтартрӗҫ. Семенов тракторис 900 килограм, Моисейев 600 килограм, Гаврилов 500 килограм ҫунтармалисене, перекетленӗ. Нормӑ тӑрӑх 300 гектар сухалас вырӑнне, Моисейев 738 гектар, Гаврилов—508 гектар, Филиппов—580 гектар, Семенов—485 гектар сухаласа хӑйсен ӗҫ нормисене ирттерсе тултарнӑ.

1937 ҫулта колхозсене авӑн ҫапса парас ӗҫре МТС-ӑн 13 молотилкӑ ӗҫленӗ. Кашни молотилкӑпа 1400-шер тоннӑ тырпул ҫапнӑ. Уйрӑмӑнах Тимофейев машиновед 1590 тоннӑ, Платонов йулташ 1377 тоннӑ тӗштырӑ ҫапса плана икӗ хут ӳстерсе тултарнӑ. Кадрсем вӗрентсе ҫитӗнтерес йенӗпе илсен, 2 ҫул хушши ӗҫлекенсем 72 ҫын, пӗр ҫул ӗҫленисем 74 трактористшутланаҫҫӗ.

Кӑҫалхи ҫуракине хатӗрленес тӗлӗшпе Шӑхасан районӗнчи МТС республикӑра чи малтан тракторсене йусаса пӗтерчӗ. Комиссйи йусав пахалӑхне „аван" тесе йышӑннӑ.

Пайанхи куна ҫураки вӑхӑтӗнче ҫунтармали, сӗрмели йапаласене 50 процент ытларах кӳрсе килнӗ, ыттисене кӳрсе килес ӗҫ те хӗрӳллӗн пырать. Тракторсемпе ӗҫлемелли плугсемпе сӳресене те ҫителӗклӗ таранах хатӗрленӗ. Халиччен ЧТЗ тракторсем ахаль плугсемпе сухаланӑ пулсан, кӑҫал 4 касалӑ плугсем пулаҫҫӗ, ХТЗ тракторсем 11 касалӑ плугсемпе ӗҫлемеле.

Шӑхасан МТС-ӗ кӑҫалхи йалхуҫалӑх ӗҫӗсене лайӑх туса ирттерсе вӑйлӑ тырпул туса илессишӗн Вӑрнар МТС-не социализмла ӑмӑртӑва чӗнчӗ. Анчах Вӑрнарсем пайанхи куна ҫитсе те нимӗнле ответ та памаҫҫӗ.

Канашлура пулнӑ трактористсем Чӑваш республикинчи малта пыракан стахановецсемпе ударниксен сльотне кайма Гавриловпа Тимофейев трактористсене палӑртрӗҫ. Вӗсем МТС-ра чи лайӑх трактористсем. Гаврилов йулташ хӑйӗн сменинче 300 гектар сухалас вырӑнне 508 гектар сухаласа 500 килограм ҫунтармали хатӗрсене перекетленӗ, вӑл халь вӑхӑтлӑха Чулкӑмака йалсовет председателӗ пулса ӗҫлет, ҫураки вӑхӑтӗнче каллех трактор ҫине ларса, иртнӗ ҫулхи чен темиҫе хут лайӑх ӗҫлеме сӑмах парать. Тимофейев Никита—комсомолец, 4-мӗш бригадӑн бригадирӗ. Унӑн бригади 1937 ҫ. нормӑна 168 процент тултарнӑ, ҫуракине чи лайӑх хатӗрлесе кӗтсе илекен бригадӑ. Тимофейев йулташ 1938 ҫулта бригадӑри ӗҫ нормине 200 процент тултарассишӗн ӑмӑртӑва тухрӗ.

Чернов.

Ăмăртса ĕçлекен икĕ районри колхозсенче

ÇĔМĔРЛЕ

Çуракине хатĕрленес ĕçре ăмăртува анлăн сармала

ÇĔМĔРЛЕ (телефонпа). Районсенче Краснодар крайĕнчи Шчербиновцăсем чĕнсе калавине сӳтсе-йавсан, вăйлă тырпулшăн ăмăртса ĕçлесси сарăлса пырать. Чылай колхозсенче ку чĕнӳве чăн-чăн ĕçпе ответлеме хатĕрленеççĕ. Çуракине лайăх хатĕрленсе тухас, кăçал нихçанхинчен те вăйлă тырпул туса илес шутпа районсем пĕр-пĕрипе ăмăртува тухнă. Çĕмĕрле районĕ Хĕрлĕ Чутай районĕпе ăмăртса ĕçлет. Çĕмĕрле райçĕрĕç пайĕн пуçлăхĕ Стафин йулташ районра çуракине хатĕрленес ĕç мĕнле пыни çинчен çапла пĕлтерчĕ:

„Красноармеец“, Левин йачĕпе тăракан тата „Большевик“ колхозсем çуракине чăннипех лайăх хатĕрленсе пыраççĕ. Ку колхозсенче çĕре çемçетмелисене хатĕрлес, вăрлăх улăштарас тата суртлас, машинăсене йусаса хатĕрлес ĕçсене туса çитерне. Анчах районра кун пек лайăх ĕçлекен колхозсем сахал-ха. Пĕтĕмĕшпе илсен, февралĕн 20-мĕшне вăрлăх суртлас плана 94 процент, тислĕк кăларас плана 60 процент, торф хатĕрлессипе 23 процент, кĕл пухассипе 48 процент анчах тултарнă. Минераллă имçамсем кӳрсе килмели çулталăк планне 14 процент тултарнă. Суртлă вăрлăхсем улăштарас тĕлĕшпе те район кайа йулса пырать. Пăрçа, йасмăк вăрлăхĕсене улăштарма тытăнман та, вĕсене района халь те кӳрсе килмен.

Çуракине хатĕрленес ĕçре уйрăмăнах „Хĕрлĕ Октябĕр“, „14 лет Октября“, „Борец“ колхозсем района кайала туртса пыраççĕ.

Виççĕмĕш пиатилеткăн пĕрремĕш большевикла çуракине кăтартулăн хатĕрленсе тухмала. Анчах та çак хиселлĕ ĕçе Çĕмĕрле районĕнче тивĕçлипе тытăнман-ха. Кайа йулса пыракан колхозсене кирлĕ пек пулăшу парса пыни çук.

ХЕРЛĔ ЧУТАЙ

Пĕтĕмпех суртлă та таса вăрлăхпа акассишĕн

Мăн Хăмаркари (Хĕрлĕ Чутай р.) „Арбаш“ колхоз кăçал вăйлă тырпул туса илме пулса, Турханти „Хресчен“ колхозпа социалисăмла ăмăртува тухрĕ. Колхозниксем ăмăртува тухнă чухне илнĕ обйазательствăсене пурнăçлас тĕлĕшпе лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Тырпул тухăçне ӳстерес çĕрте вăрлăх тĕп вырăнта тăрать. Çакна шута илсе „Арбаш“ колхозра çурхи тырăсене пĕтĕмпех таса та суртлă вăрлăхсемпе акма хатĕрленеççĕ. 1080 пăт сĕлĕ, 300 пăт тулă, 90 пăт кантăр вăрри, 30 пăт йĕтĕн, 12 пăт вир вăрлăхĕсене тĕплĕн тасатса хунă. Нумайăх та пулмасть çывăхри колхозран 80 пăт шултра йышши пăрçа вăрлăхĕ улăштарса килнĕ. Вăрлăхсене кĕлетсенче лайăх сыхласа усраççĕ. Çак кунсенче вăрлăхсен шăтас пахалăхне тĕрĕслене. Тĕрĕслене хыççăн пур тĕрлĕ вăрлăхсем те лайăх шăтнине палăртнă.

Çуракине хатĕрленес ĕçре колхозра ватă стариксем те тăрăшса ĕçлесе пыраççĕ. Вĕсем сӳре пайавĕсене çĕнĕрен йавса хатĕрлене, кӳлмели таврашсене йусаса çитерне.

Колхозра çуракине хатĕрленес йенĕпе чылай ĕçсем тунă. Анчах колхозниксем халиччен тунă ĕçсемпе лăпланса лармаççĕ. Халĕ кунта çуракине хатĕрленес ĕç хĕрӳленсех пырать. Çуракине пур йенĕпе те кăтартулăн кĕтсе илес тĕлĕшпе йулашки ĕçсене тăваççĕ.

Иртнĕ çулта çуракине иртерне вăхăтра лашасем начартарах пулнă. Кăçал лашасем мăнтăр, вĕсене вальли кирлĕ таран апат уйăрса хунă. Коньухсем лашасене çуракине мăнтăр кăларас шутпа тимлĕн ĕçлеççĕ.

Колхозра агрокружок ĕçлет. Унта акакансем, сӳрекенсем, сухалакансем тата ыттисем те—пурĕ 25 колхозник вĕренеççĕ.

Йе. Брызгалов.

Пĕр колхозри ăмăрту итогĕсем

Мăн Йавăшри (Хĕрлĕ Чутай р.) Сталин йачĕпе тăракан колхозри колхозниксем Шăхасан районĕнчи Киров йачĕпе тăракан колхозри тата Краснодар крайĕнчи Шчербиновски районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем çуракине хатĕрленессипе чĕнсе каланине сӳтсе-йавнă хыççăн, бригадăпа бригадă, колхозникпе-колхозник гектартан 130 пăтран кайа мар тĕш тырă туса илессишĕн социалисăмла ăмăртува хутшăнчĕç.

Колхозниксем ăмăртува хутшăннă хыççăн, çуракине хатĕрленессипе хастарлăн ĕçлеме тытăнчĕç. Уйрăмăнах, вăрлăхсене суртлассипе тата çĕре çемçетмели вырăнти йапаласене пухассипе И. Апчуркин, Т. Петров, П. Илйина тата ытти колхозниксем кулленхи ĕç нормине 150—200 процент тултарса пыраççĕ.

Колхоз республикăри малта пыракан стахановецсемпе ударниксен счотне çуракине хатĕрленсе çитнипе кĕтсе илет.

Пайанхи куна вăрлăхсене пĕтĕмпех триййер витĕр кăларнă. Пĕрчĕлĕ тырăсене алăпа суртланă. Акмали вăрлăх мĕнле пахалăхпа шăтнине тĕрĕслене. Çĕре çемçетмели вырăнти йапаласене планран ытлашшипех пухса хатĕрлене. Лаша кӳлмели таврашсене йусанă. Йалхуçалăх машинисене йусаса çу çĕрсе сарайне тирпейлесе лартнă. Начар лашасене кантарма тăратнă. Колхозниксем çураки вăхăтĕнче мĕнле ĕçре ĕçлемеллине палăртса хунă.

Халĕ агротехникă ĕçне вĕренеççĕ.

Ф. Семенов.

Аратлă сурăхсен çăм пахалăхне ӳстерессишĕн

Аратлă сурăхсенчен Чăваш республикинче çакăн пек ăратсене ĕрчетеççĕ: рамбулйе, прекос, вырăнти меринос—çинçе çăмлисем, цигай-меринос — çурмала çинçе çăмлисем тата ап-какайшăн усракансем гемпширпа акăлчан сурăхĕсем (Йетĕрнепе Куславкка районĕсенче). Кусемсĕр пуçне тата çав ăратăсемпе вырăнти ăратăран пулнă метис сурăхсем те нумай тĕл пулаççĕ.

Çав аратлă сурăхсенчен тата метиссенчен илекен çăм пит хаклă, вăл çăмсем хаклă йышши сукно тăвас ĕçе каяççĕ. Анчах та, 1937 çулхи çăм тухăçне илсе пăхсан, çăм пахалăхĕ пит начар пулнă. Çăм хатĕрлекен организацисене сутнă çăмран 50 процент ытларах çавăн пирки хак йӳнетсе илмеле пулнă. Çакă ĕнтĕ вăл сурăх ĕрчетекен хуçалăхшăн та, çăм промышленнăçĕшĕн те сиенлĕ пулса тăрать.

Çăм пахалăхĕ начар пулни мĕнрен килет-ха? Чи малтанах вăл сурăхсене мĕнле пăхнинчен, мĕнле апатлантарса усранинчен килет. Унсăр пуçне тата каснă çăма хатĕрлев организацине сутиччен мĕнле пăхса усрани те пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Çăм пахалăхĕ лайăх пултăр, хăйне тивĕçлĕ хакпа хакламала пултăр тесен, хаклă йышши çăмлă сурăхсене йалан пĕр пек тикĕс, пĕр пек пахалăхлă апат парса усрама кирлĕ. Çанталăк пит сивĕ тăнă вăхăтра лайăхрах апат пама тăрăшмала. Сурăх куллен пĕр пек тикĕс апат илсе тăмасан, вăхăтран вăхăта выçă тăрать пулсан, çав вăхăтра унăн çăмĕ çинçелсе ӳсет. Вара çавăн пек çăм таталакан пулать. Йалан çурмала выçă тăнă сурăхсен çăмĕ çинçерех, çавăн пирки çирĕп мар пулать. Çавăн пек çăм промышленнăçа йурăхсăр, çавăнпа та ун пек çăмсене илнĕ чух хак йӳнетсе илеççĕ.

Çăм пахалăхĕ тата сурăхсене таса тытса усранинчен те нумай килет. Апат панă чух сурăхсем çине çӳп-çапсем ӳкмеле мар тума кирлĕ. Сурăх çине утă-улăм çӳпписем йе урăх çӳп-çапсем ӳксе тăмала пулсан, çăм çӳп-çапланса кайнипе унăн хакĕ те йӳнелет.

Сурăх çăмне мĕнле тата хăш вăхăтра касни те çăм пахалăхĕнче пит пысăк вырăнта тăрать. Мериноссене, çурмала çинçе çăмлă ăратлă тата 1-мĕшпе II-мĕш клас шутлапакан метиссене çулталăкра пĕрре çеç, çуркунне, ăшă кунсем пуçлансан касмала.

Çуркунне сурăхсене чĕр курăк çине кăларсанах вĕсем малтанхи кунсенче варвиттипе чирлеççĕ. Çапла пулни вăл çăма варалама пултарать. Çавăнпа та сурăхсене чĕр курăк çине кăлариччен пĕр уйăх малтан вĕсен хӳре çăмне касса илме кирлĕ.

Хаклă çăм паракан ăратлă сурăхсен çăмне çапла йĕркепе касмала:

каснă чухне çăма таткалама йурамасть, касса илнĕ хыççăн каснă йенне шалала туса хуçлатса çыхса хумала;

çинçе çăма урăх тĕрлĕ çăмпа хутăштармала мар, çинçе çăм çинче пĕр пĕрчĕ шултра çăм пулсан та çăм пахалăхĕ чакать;

çăм пахалăхĕ упăн вăрăмĕшĕнчен килет. Çавăнпа çăма тир çумĕнченех касмала.

Касса илнĕ çăма пурне те çăм хатĕрлекен организацисене сутмала. Çăм хакĕсĕр пуçне çинçе, çурмала çинçе тата метиссенчен илнĕ çăм хакĕ çине çăм-хатĕрлекен организаци 100 процент премипадбавкă парать.

Ăратлă сурăхсем сурăх ĕрчетекен хуçалăхсене пит пысăк тупăш параççĕ. Анчах та ăратлă сурăхсене пăхса усрама пĕлмеле, вĕсене лайăхрах апат парса тăма тăрăшмала. Ăратлă сурăх ĕрчетекен хуçалăхсен, сурăх фермисенче ĕçлекенсен ăратлă сурăх ĕрчетмели ĕç техникине алла çавăрса илмеле. Зоотехниксен вĕсене пулăшасси çине ытларах çавăрăнса пăхмала.

М. Смирнов.

Çăм хатĕрлев кантурĕ.

Шĕкĕрте культмассăлă ĕç çителĕксĕр

Халăх хушшинче политикăла агитацине большевикла организацилесе йарас ĕçре йалсовечĕсем, колхоз правленийĕсем, вулав çурчĕсем, шкулсем тата колхоз активĕсем ответлă пулмала. Анчах Шăхасан районĕнчи Шĕкĕр йалсоветĕнче ку ответлă задачăна пурнăçлассипе йапăх ĕçлеççĕ. Йалсоветĕнче 3 колхоз, вулав çуртсем, клубсем, 13—15 учител ĕçлет. Мĕн чухлĕ актив! Апла пулин те хальхи вăхăтра ку йалсоветĕнче культурăлă-массăлă ĕç пĕтĕмпех сӳнсе ларнă. Уйпуçĕнчи вулав çурчĕн пуçлăх та çук.

Йалти çамрăксене большевикла воспитани парас ĕçре пуçламĕш комсомол организаци те ĕçлемест. Сойувра тăман çамрăксемпе пухусем туса иртермеççĕ, вĕсемпе ĕçлемеççĕ, çамрăксене комсомол ретне хутшăнтармаççĕ.

Вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçре агротехникăна лайăх пĕлни кирлĕ. Шĕкĕрти „Красный пахарь“ колхозра агрокружок ĕçлемест-ха. Çуракинче акмали вăрлăхсене пайанхи кунчен те суртласа пĕтерמен, уйа тислĕк кăларас ĕçĕн планне çуррине те пурнăçламан. Ĕçре колхоза йалсовечĕ те, комсомол организаци те пулăшни çук.

Колхозниксем пуйан пурнăçпа пурăннă май, вăхăта культурăлă ирттересшĕн, вĕсем кино, спектакльсем курасшăн, радио тăрăх тĕнчери лару-тăру çинчен, Совет Союзĕнчи çĕнĕ çитĕнӳсем çинчен илтесшĕн. Колхозниксен ĕмĕчĕ Шĕкĕр йалсоветĕнче пурнăça кĕрсе пыраймасть. Йала 2—3 уйăхра тин кино пырать.

Шĕкĕр йалсоветĕнче трахомпа кĕрешес ĕç те çителĕксĕр. Йалсоветра 2 трахсестра ĕçлет, анчах вĕсене ĕçлеме йалсовет çителĕклĕ услови туса памасть.

Йалсовет çумĕнче тĕрлĕрен секцисем пур, анчах вĕсем хут çинче çеç шутланаççĕ. Хутла пĕлменнисен шкулне 25 çын вырăнне 3—4 çын кăна çӳреççĕ.

Халăх хушшинче политикăла агитаци ĕçне организацилес ĕçре стена хаçачĕсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Апла пулин те Шĕкĕр йалсоветĕнчи нихăш колхоз çумĕнче те стена хаçачĕсем тухмаççĕ.

Колхозниксем хушшинче политикăла агитацине анлăн туса пырас ĕçре йалсовечĕн те, вулав çурчĕн те, пуçламĕш комсомол организацин те вирлĕн ĕçлемеле.

Дм. Иванов.

Тĕрлĕ сăлтавсемпе „шанчăксăра“ кăларнă

—„Порфирйев,— тенĕ Трак райкомол секретарĕ Георгийев,—столовăйĕнче йĕркелĕх кӳмест, апат начар пĕçереççĕ, апат çийес пулсан нумай кĕтмеле. Астумастăп хăш числине, епĕ столовăйĕнчен апат çимесĕрех таврăнтăм...

Порфирйев политикă тĕлĕшĕнчен шанчăксăр çын“.

Çапла ĕнтĕ Георгийев столовăйĕнче вăхăтра апат çийеймен шĕн, йалпо председателĕ Порфирйев политикă тĕлĕшĕнчен шанчăксăр çын пулса тăнă.

—Скворцов колхоз ферминчи выльăхсене пĕтересшĕн. Вăл политикă тĕлĕшĕнчен шанчăксăр çын,—тенĕ. Анчах Георгийев хăй каланă сăмахсене пĕр чĕрĕ фактăсемпе те çирĕплетме пултарайман. Вăл елекçĕсен хыççăн кайнă. Ĕç тĕрĕс пулман. Лайăх ĕçлесе пынă йалсовет председателĕ Крылов комсомолец çинчен çапла каланă:

—Крылов пичĕшĕн арăмĕ кулак хĕрĕ пулнă. Крылов вăл политикă тĕлĕшĕнчен шанчăка çухатнă çын,—тенĕ. Çак сăлтавпа çав пухурах ăна райкомол членĕнчен кăларнă.

Районри комсомол активĕн февральте пулнă пухуvĕ—елек хыççăн кайса айапсăр комсомолецсене (Скворцов, Крылов, Порфирйев) йулташсене политикă тĕлĕшĕнчен „шанчăка çухатнă“ çынсен йатне панине тĕрĕс мар,—терĕ. Скворцовпа Порфирйева тата Крылова комсомол ретĕнче тăрса, вирлĕн ĕçлеме сĕнчĕ.

Райкомол бӳровĕн тата унăн секретарĕ Георгийевăн актив пухувĕнче калаçнисенчен кирлĕ пек вывăд тумала.

Ник. Петров.

ÇĔНĔ МТС

ЙЕТĔРНЕ. Кăçалхи çуракинчен пуçласа районра машина-тракторлă станци организацилеççĕ. Халь МТС-ра ĕçлеме кирлĕ кадрсем хатĕрлеççĕ.

Трактористсен курсĕнче 60 çын вĕренет. Аслă агрономпа механик тата директор килчĕç те ĕнтĕ.

Ник. Цветков.

„Фрунзе“ миноносец (Хуратинĕс флочĕ) тинĕсре тăнă вăхăтра.

Йа. Поляков фото-ӳкерчĕкĕ (Союзфото).

Чапайев вилĕмĕ

Вырăс халăх йумахĕ *)

Таçти çĕрте, таçти патшалăхра, тĕрĕссипе каласан, шăп та шай епĕр пурăнакан çĕршыврах пурăннă, тет, пĕр хресчен. Ăна Иван тесе чĕннĕ, тет. Унăн виçĕ ывăл пулнă. Аслă ывăлĕ ашшĕ пекех Иван йатлă пулнă, вăталăхĕ Петĕр, кĕçĕнни—Василий.

Пурăннă вĕсем питĕ начар, тискер кайăк тытмали хатĕрĕсем те, пулă тытмали кимĕсем те пулман вĕсен.

Çапла вара çак Иван йатлă хресчен пурăннă-пурăннă та чухăнлăхран тухаймасăрах вилсе кайнă.

Кунăн арăмĕ ачисемпе тăлăха тăрса йулчĕ. Ачисем çитĕнсе çитсен вăрçă сиксе тухрĕ. Аслă ывăлĕсене вăрçа илсе кайрĕç, амăшĕ патне кĕçĕн ывăлĕ—Василийĕ кăна тăрса йулчĕ. Пурăнсан-пурăнсан кăна та вăрçа кайма черет çитрĕ. Ун чухне пурне те йĕркипех илсе пынă. Василий амăшĕпе сывпуллашса уйăрăлчĕ те вăрçа тухса кайрĕ. Мĕскĕн амăшĕ пĕр пĕчченех тăрса йулчĕ.

Акă пырать Василий пĕр йалпала. Ку йалтан инçетрех мар унăн мăнаккăшĕ пурăннă. Василий шутлать:

—Тавай-ха мăнакка патне кĕрсе сывпуллашса тухам, тен вăрçăран таврăнаймăп та,—тет.

Кĕчĕ.

—Сывă-и, мăнакка?

—Сывах-ха, сывах, ывăлăм. Ăçта кайатăн?

—Вăрçа кайатăп-ха, мăнаккам. Аслă пиччемсем тахçанах çапăçаççĕ ĕнтĕ, ну манăн та кайса çапăçас пулать.

Мăнаккăшĕ кăна хирĕç çапла калать:

—Игле-ха, ывăлăм,—тет.—Епĕ сана пĕр çĕрĕ парăп. Вăл çĕрĕ ман упăшкаман ранах йулнăскер. Вăл ăна туркă вăрçинчен илсе килчĕ. Вăл çĕррĕн çав тери пысăк асамлă вăй пур. Ăна тăхăнсан сана ни пуля тивмест, ни хĕç витмест. Анчах та çĕррĕн вăйĕ типĕ çĕртре чухне анчах хăтарать, шывра вăл самайах чакать,—çакна лайăх асту,—тет.

Василий мăнаккăшне çĕрĕ панăшăн тав турĕ те, унпала уйăрăлса малала тухса утрĕ. Акă çитрĕ вăл призыва. Унтан çара илсе карĕç. Çитрĕ те вăрçă ĕçне вĕренме тытăнчĕ. Çав тери хăвăрт вĕренсе çитрĕ вăл, çав тери вăйлă та ăслă салтак пулса тăчĕ, пĕр сăмахпа калакан—тӳрех вăрçа тухса карĕ. Вăрçăра кăна чăнах та нийепле пуля та тивеймест.

Виçĕ çул пурăнчĕ Василий Иванович вăрçăра. Унтан, Совет влаçĕ пулса тăрсан, килне таврăнчĕ. Хăйсĕр пуçне унăн пĕр пиччĕшĕ те таврăнайман иккен, иккĕшĕ те вилсе йулнă. Василий Иванович вилĕнче пурăнкаларĕ-пурăнкаларĕ те авланма шут тытрĕ. Хăйсен йалĕнчи пĕр чухăн хĕрне качча илчĕ, туй туса пачĕ. Тытăнчĕ Василий Иванович арăмĕпе пурăнмашкăн. Пурăнсан-пурăнсан, пĕр çултан-и, ик çултан-и унта, вĕсен икĕ ача çуралчĕ.

Пĕрре çапла Василий Иванович хыпар илет: генералсем Совет влаçне пĕтерсе лартса, хăйсен влаçĕ туса хума шут тытнă тенине. Тарăхсах кайать Василий Иванович генералсем çине, вĕсем пĕтĕм ĕçхалăхне пĕтерсе тăкма шутланăшăн. Шутларĕ-шутларĕ те çакăн пек шут тытрĕ: „Тата тепĕр хут вăрçа кайатăп, хамăн çĕршывăма пĕтерме памастăпах!“.

Унтан амăшне каларĕ:

—Ну, хаклă аннем, еп Совет влаçне сыхлама тухса кайатăп,—терĕ.

Кăна хирĕç амăшĕ куççуль витĕр çапла таврăса калать:

—Виçĕ ывăлччĕ манăн, есĕ кăна тăрса йултăн. Иккĕмĕш хут вăрçа тухса кайатăн пулсан, есĕ те пуçна çухатăн,—тет.

—Çук, анне, еп кайатăпах,—тет ывăлĕ.—Вилес-тăвас пулсассăн ман пĕчĕк ачамсене ан пăрах,—тет.

Амăшĕпе тата арăмĕпе уйăрăлчĕ те хăй Василий, утне йĕнерлесе утланса Хĕрлĕ Çара тухса вĕçтерчĕ.

Çитрĕ совет çарĕсем патне, хĕрлĕ командирсем патне. Çĕлĕкне хывса пуçне тайрĕ те çапла каларĕ:

Сывă-и, совет хĕрлĕ командирĕсем? Епĕ те Хĕрлĕ Çарта пулас тетĕп, хамăн тăван çĕршывăма пулăшас тетĕп, ĕçхалăхне ирĕке кăлармашкăн Колчакпа Деникина хăваласа йарас тетĕп,—тет.

Командирсем кăна калаççĕ:

—Сывă пул, паттăр йаш! А кам пулатăн-ха есĕ? Хушамату мĕнле санăн?—тесе ыйтаççĕ унтан.

—Еп çав-çав йал çынни пулатăп, мана Василий Иванович тесе чĕнеççĕ, а хушаматăм—Чапайев.

Чапайева çавăнтах Хĕрлĕ Çар командирĕ туса хучĕç.

Нумай пулчĕ-и, сахал-и, йунлă çапăçу çитсе перĕнчĕ. Чапайев учĕ çине сиксе ларчĕ те пĕрех кăна ыткăнчĕ тăшмансем çине. Çавапа çулнă пек тăкма тытăнчĕ вăл тăшмансене. Колчаксене те çулать, деникинцăсене те ăшалантарать, ултă сехет хушши пĕр канмасăр турарĕ. Хĕçĕпе те касать, сăннипе те чикет, наганĕпе те перет. Пĕтĕм хир тăшмансен виллисемпе тулчĕ. Колчак нийепле те чăтса тăраймарĕ, хăйĕн йулашки салтакĕсемпе айаккала пăрахса тарчĕ.

Хĕрлĕ Çар салтакĕсем Чапайев çинчен çапла сарса та йачĕç:

—Вăт ку командир! Епĕр Чапайевпа ăçта тенĕ унта кайатпăр.

Пĕр ерне те иртеймерĕ. Колчак икĕ хут ытларах çар пухрĕ те каллех Хĕрлĕ Çара хирĕç тухрĕ. Сиксе ларчĕ Чапайев каллех учĕ çине, сиксе ларчĕ те тытăнчĕ тăшмансене хайаррăн турамашкăн: хĕçĕпе те касать, сăннипе те чикет, наганĕпе те перет. Пĕр талăк хушши çапла турарĕ вăл тăшмансене. Колчак çарне çуррине ытла тураса тăкрĕç, хăшне-пĕрне тыткăна илчĕç. Колчак хăй аран-аран тарса хăтăлчĕ.

Çапăçу хыççăн кăштах канчĕç, çирĕç, ĕçрĕç. Унтан Чапайев Фрунзе йулташ патне кайрĕ.

Фрунзе калать кăна:

—Ну, Чапайев, çамрăк герой! Колчака тĕппипех çапса салатма сана халь пĕтĕм арми паратăп. Колчак каллех çар пухма тытăннă,—тет.

Акă çитрĕ Чапайев хăйĕн армийĕпеле Шурă шыв[1]) хĕррине. Вырнаçтарчĕ хăйĕн çарне пĕр йал çывăхне, анчах колчаковецсем ăçта тăраççĕ, ăна пĕлмест. Мĕн пулсан, мĕн килсен те пĕлесех пулать: ăçта Колчакăн штабĕ? Тăчĕ те хайхи Чапайев çапла калать хăйĕн çарне:

—А ну, ачасем, кам пырать манпала пĕрле тăшман ăçта тăнине йĕрлесе тупма?—тет.

Ну, паллах, унпа пĕрле кайма килĕшекенсем нумай тупăнчĕç. Анчах вăл пĕр аллă çын, йе çĕр çын-и унта, суйласа илчĕ те çула тухса кайрĕ. Кунĕ кăçалаках сулăннă пулнă иккен. Çул çинче кусем пĕр хĕрарăма хирĕç пулаççĕ.

—Ей, инке, ăçта кайатăн?

—Еп хам упăшкама курма Хĕрлĕ Çара кайатăп, командир йулташ. Анчах çулран аташса кайрăм-ха акă, тата хырăм та выçă. Иккĕмĕш талăк утатăп ĕнтĕ, хам ăçта çитсе тухассине хам та пĕлместĕп.

—Ну, айта еппин пирĕнпеле, епĕр сана çитерĕпĕр.

Чапайев çав хĕрарăма хăйсемпеле пĕрле илсе, тăраничченех çитерме хушрĕ. Илчĕç хай хĕрарăма хăйсемпе пĕрле. Çитерчĕç, ĕçтерчĕç. Ку хĕрарăм польак çынни пулнă иккен, ăна Колчак шпионкă туса йанă мĕн. Анчах та Чапайев ун çинчен нимĕн те пĕлмен.

Çитрĕç кусем пĕр йала. Йалĕ шăп та шай Шурă шыв хĕрринче ларать. Мужиксем пĕтĕмпех каласа пачĕç колчаковецсем ăçта тăни çинчен: инçех те мар вăрман хыçĕнче, пĕр вунă çухрăмра иккен. Василий Иванович хăйĕн салтакĕсене калать:

—Çапла тăватпăр, ачсемĕр: раз каç пулса çитрĕ-тĕк, кунтах çывăрса çĕркаçăпăр, а ыран ирхине хамăр çара илсе килме кайатпăр,—тет.

Тăратса тухрĕ Чапайев постсем, хăй канма выртрĕ. Пурте çывăрса карĕç, Василий Иванович хăй те çывăрса карĕ, пĕртен-пĕр хурал кăна тăрса йулчĕ.

А польак хĕрарăмĕ çывăрмасть, кĕтсе тăрать. Чапайев çывăрса кайасса кĕтсе илчĕ те вĕçтере пачĕ хăвăртрăх Колчак патне. Чупса çитрĕ те Чапайев ăçта тăни çинчен, ун тĕп çарĕ хăйпеле пĕрле марри çинчен каласа пачĕ. Колчак урăм-сурăм савăнса кайса хăйĕн генералĕсене çавăнтах приказ пачĕ: „Тытса килĕр Чапайева, чĕррĕн тытма май килмесен виллине те пулин тытса килĕр!“—тет.

Пухрĕç генералсем хăйсен çарĕсене. Пухрĕç те виçĕ йенчен çавăрса илчĕç Чапайева. Пострисалтаксене çĕрле пĕтĕмпе вĕлерсе пĕтерчĕç, унтан шăп Чапайев ăшă ыйăхпа çывăрнă вăхăтра, тӳрех вĕсем çине тапăнчĕç.

Сиксе тăчĕ Чапайев, анчах хăйне пур йенчен те тăшмансем хупăрласа илнĕ.

—Тăрăр, йулташсем, хăвăртрах! Утав!—тесе кăшкăрса йачĕ вăл.

Ну, мĕн каласси пур ĕнтĕ, вĕсем унта нумай-нумай пĕр çĕр çын пулнă пулĕ те, а колчаковецсем темиçе пин çын вĕт. Хĕрлисем пӳртсенчен пăшалсемпе хĕрӳлĕн переççĕ, хăйсем патне йамаççĕ. Ак патрон пачах та сахал тăрса йулчĕ вĕсен. Вара Чапайев çапла приказ пачĕ:

—Чупăр, ачасем, Шурă шыв хĕррине, кунта пурпĕр шăтарса тухайрас çук епĕр. Шурă шыв урлă каçсан, унта вара хамăр çар та инçе мар, вĕсемпе пĕрлешĕпĕр те каллех Колчак çине сиксе ларăпăр.

Тытăнчĕç чапайевцăсем йуханшыв урлă ишсе каçмашкăн. Курать Колчак—хĕрлисем шыва пыра-пыра сикеççĕ. Курать те кăшкăрать хăйĕн генералĕсене:

—Ан каçарăр вĕсене шыв урлă! Перĕр мĕн пур вăйпала! Чапайева алран вĕçертсен, вăл пире пурне те чĕррĕн хăварас çук!

Колчаковцăсем пулемет çавăрса лартрĕç те тытăнчĕç шатăртаттармашкăн. Нумайччен ишрĕ Василий Иванович, анчах та ун аллине пуля тивсе амантрĕ (шывра леш асамлă çĕррин вăйĕ пĕтрĕ ĕнтĕ). Пурĕ-пĕр Чапайев ишме чарăнмасть. Йĕри-таврах пульăсем шăхăраççĕ, хĕрлисене темĕн чухлĕ вĕлерсе пĕтерчĕç. Колчак шавах кăшкăрса тăрать:

—Чапайева персе вĕлерĕр, леш йенне ишсе каçма ан парăр. Пурте ун çине тĕллесе перĕр.

Акă тата тепĕр пуля пырса тиврĕ Чапайева,—пуçĕ шыва путма пуçларĕ унăн. Çапла вара Василий Чапайев пĕтĕмпех путса çухалчĕ. Çыран хĕррине çитесси те нумай йулманччĕ, хĕрлисен пулăшувĕ те çитсе ĕлкĕрнĕччĕ ĕнтĕ, анчах пурĕ-пĕр çăлăнса йулаймарĕ мĕскĕн...

Çитсе çапрĕç хĕрлисем колчаковцăсемпе деникинцăсем çине, вĕсене пуçĕпелех аркатса тăкрĕç, совет çĕрĕ çинчен хăваласа йачĕç тăшмансене.

Чапа тухрĕ Василий Иванович Чапайевăн йачĕ. Ăна пирĕн çĕршывра пур çĕрте те хисеплеççĕ.

„Творчество народов СССР“ йатлă кĕнекерен илнĕ.

Вырăсларан И. Тукташ куçарнă.

*) Карели АССР-че, Лоухский районра „Красный рыбак“ колхозри 54 çулхи колхозник Матвей Михайлович Коргуйевран çырса илнĕ.

[1]) Шурă Атăл—река Белая.

Сочувствуйущисене вĕрентсе çитĕнтерессине тата парти речĕсен ÿсĕмĕ

1938 çулă кĕнĕрен вара партин Трак райкомĕ йалта активлă ĕçленĕ, халĕ райони ĕçе йертсе пырас вырăна лартнă Илйин, Павлов, Љвов йулташсене парти членĕн кандидатне илнĕ. Иртнĕ çулсенче начар ĕçленĕ, халĕ малти рете тухнă йалсоветăн председателне Васийев йулташа кандидатран члена куçарнă. Районта сочувствуйущисем 24 çын. Трак районĕнче ССР Сойузĕн Аслă Советне суйласа иртерме хатĕрленнĕ чухне партире тăман агитаторсем 64 çын пулнă пулсан, халĕ 747 агитатор шутланаççĕ.

Çак примерсем сочувствуйущисен ушкăнĕсемпе партире тăман активиссем парти ретне ÿстермелли паха резерв пулса тăнине уççăн кăтартса параççĕ. Районти 24 сочувствуйущисен ретĕнче тăракансем—районти чи лайăх çынсем, колхозри стахановецсем, общественăй ĕçре лайăх ĕçлекенсем, партире тăман агитаторсем. Çак активиссенчен йулашки вăхăтра чылайăшне йертсе пырас ĕçе лартнă.

Суйлав кампанийĕ сочувствуйущисемшĕн тата партире тăман активиссемшĕн политикăла пысăк шкул пулса тăнă. Сочувствуйущисем Йаков Йаковлев, Леонид Спиридонов, Андрей Йефимов пĕтĕм суйлав кампани вăхăтĕнче халăх хушшинче агитаци ĕçне туса пынă. Вĕсем халĕ те çак ĕçе çине тăрса туса пыраççĕ.

Çакнашкал примерсене нумай илсе кăтартма пулат. Ахаљтен мар ĕнтĕ, сочувствуйущисемпе партире тăман активиссем хушшинче большевиксен парти ретне кĕрес хавас пысăк. Вĕсем Ленин—Сталин партин аслă семйинче пулма тăрăшаççĕ. Ку вăл вĕсемшĕн чи чыслă ĕç пулса тăрат.

Анчах та партин Трак районĕнчи организацийĕ сочувствуйущисене вĕрентсе çитĕнтерес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлет. Çакăн пекех партире тăман актив хушшинчи ĕç те кирлĕ пек пулса пымаст. 1937 çулта парторганизаци пĕр сочувствуйущине çеç парти кандидатне илни, сочувствуйущисен шучĕ те пĕр вырăнта тăни—çаксем пурте парти ретне ÿстерме, ун резервне вĕрентсе çитĕнтерессине çителĕксĕр тăни çинчен калаççĕ.

Акă уйăм фактсем: крахмал заводĕнчи, МТС-чи пуçламĕш организацисем иртнĕ çулта пĕр çынна та сочувствуйущине илмен. Анчах çав организацисене Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн вăйхала хурса ĕçлекенсем, общественăй ĕçре куллен активлă ĕçлекенсем сахал мар. Крахмал заводĕнчи парторганизаципе çакнашкал сийенлĕ шухăш пур: „Пирĕн рабочисем йалан ĕçлемеççĕ, вăхăтлăх ĕç производствăра ĕçлеççĕ. Çавăнпа та сочувствуйущисен ушкăнĕ тума май çук". Çакă ĕнтĕ вăл парторганизаци массăпа тачă çыхăну тытманнине, парти ĕçĕшĕн чĕререн тăрăшса ĕçлекен çынсене парти ретне кĕрес тума пулăшманнине кăтартат.

Райком йенчен те кашни сочувствуйущи çине уйрăмăн пăхни çук. Парти тасатăвĕ вăхăтĕнче, 1934 çулта кандидатран сочувствуйущине куçарнă И. Филиппова Йерофейева йулташсем халĕ те парти членĕн кандидатне илсе çитмен. Камсем-ха вĕсем, мĕнле ĕçлеççĕ вĕсем? И. Филиппов йулташ малтан нумай вăхăт хушши колхоз председателĕнче, унтан почтă агенствин пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ. Халĕ йăна районти çыхăну пайĕн начаљникне лартнă. Анчах унпа уйрăмăн ĕçлеменнипе тата вĕрене куллен пулăшман пирки вăл халĕ те кандидата куçаймаст. Ăна халĕ те райком та, пуçламĕш организаци те конкретлă ĕç паман, ĕçре пулăшу сахал.

Райком секретарĕ Морозов йулташ калана тăрăх, кăçал сочувствуйущисене пухса пĕр пуху туса иртерне, вĕсем икĕ хутчен партин уçă пухуйĕнче пулнă. Çакăнпа вара сочувствуйущисем хушшинчи ĕç пĕтсе ларнă.

Сочувствуйущисене вĕрентсе çитĕнтерес ĕçре чухнĕ кашнин çине уйрăмăн пăхмала. Кашни çын çине уйрăммăн пăхасси, çынсене çăнаса вĕренесси, вĕсене лайăх вĕрентсе çитĕнтерессишĕн тăрăшасси—партин ĕçĕнче тĕп вырăнта тăрат. Парти Тĕпкомĕн йанварти пленумĕ çакăн çинчен тата тепĕр хут асă илтерчĕ. Çакна сочувствуйущисем хушшинче ĕçлене чухне йалан асра тытмала.

Сочувствуйущисем хушшинче ĕçлес ĕçе коммуниссене пурне те хутшăнтармала. Трак районĕнчи организацисене сочувствуйущисене ретне ÿстересси халĕ те питĕ вăраххăн пырат. 1938 çулта кĕнĕрен вара 8 çынна çеç сочувствуйущисен ретне илнĕ. Çапла вара парторганизацисен сочувствуйущисене вĕрентсе çитĕнтерес, партин шанчăклă резервне туса ÿстерес тĕлĕшпе начар ĕçлени куç умĕнчех.

Парти организацин сочувствуйущисемпе общественăй ĕçе активлăн хутшăнтармала, партин ĕçĕсене хутшăнтармала, кам мĕнле ĕç тума пултарнине шута илмеле. Сочувствуйущисен канашлăвĕсене час-часах туса иртермеле, вĕсене парти пухуйĕсем йышăннă решенисем çинчен каласа памала, хайсене хушна ĕçсене пурнăçа кĕртнине тĕрĕслемеле. Çак ĕçсем Трак парторганизацин тата парти райкомĕн практикинче сахал-ха.

Р. Шашков.

Тепĕр хут ĕçе тытăнчĕç

ВĂРНАР. „РСФСР Аслă Советне суйламалли Положенине" районти суйлавçăсем кружоксенче вĕренме тытăнчĕç. Хăмăш йалсоветĕнче, вулав çурчĕн пуçлăхĕ Быков йулташ пуçарнипе, ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлана вăхăтра ĕçленĕ кружоксем халĕ тепĕр хут ĕçлеме пуçларĕç. Вăл кружоксенче 23 агитатор ĕçлеççĕ.

Çавăн пекех Кăкшăмри „Ĕç йалавĕ" колхозпа Хапăсри „Советская деревня" колхоз çумĕнчи кружоксенче те суйлав Положенине вĕренме тытăнчĕç.

Ст. Улангай.

Вăрман хатĕрлевĕнчи стахановла уйăхлăх

Шăнкăртамсен опычĕпе ĕçлемеле

ЙĔПРЕÇ. Вăрман хатĕрлев планне тултарас ĕç йапăх пурнăçланса пырат. Варманпромхозри руководителсем стахановла уйăхлăха сăмахпа кăна хутшăнса лăпланса ларнă. Вăл акă çакăнтан аван курнат. Варманпромхоз февралĕн 15 мĕшне пĕрремĕш квартал планне—хатĕрлессипе 24 процент, турттарассипе 22 процент, механизацилĕ çулпа турттарассине 30 процент çеç тултарнă. Вăрманпромхозра ĕçлекенсем рабочисем хушшинче социалисăмла ăмăртува организацилемеççĕ, ĕç вăйĕ пухассипе колхозсене тухса çÿремеççĕ. Култмассălă ĕç те начар пырат.

Йĕпреç вăрманпромхозĕнче Йĕпреç, Канаш, Турхан, Шăнкăртам районĕсем ĕçлемеле. Анчах çак районсенчен пĕр Шăнкăртам районĕ çеç стахановла уйăхлăха тивĕçлипе хутшăннă. Шăнкăртам районĕнчи йалсоветсемпе колхозсем вăрман хатĕрлев планне стахановла уйăхлăхра тултарассишĕн кĕрешеççĕ. ПСК(б) Парти райкомĕпе райĕçтăвком хăйсен активне йалсоветсемпе колхозсене массăлăăнлантарулă ĕçе туса пыма йанă.

Вăрманта ĕçлекенсем валљи йатарласах районри хаçата 100 екземплљар çырăнса панă. Кунсăр пуçне центрти, республикăри хаçатсем çителĕклĕ пырса тăраççĕ.

Шăнкăртам районĕнче ĕç вăйĕ кунран кунах ÿссе пырат. Стахановла уйăхлăх пуçланнă кун вăрманта 124 çын çуран, 120 çын лашапа ĕçленĕ пулсан, февралĕн 14-мĕшĕнче çуранисем—359 çын, лашапа 191 çын ĕçленĕ.

Йĕпреç районĕ питте начар ĕçлет. Йĕпреç районĕ стахановла уйăхлăха йачĕшĕн çеç хутшăннă. Вăрманта ĕç вăйĕ çителĕксĕр. Районĕпе кашни кун 640 çын çуран, 825 çын лашапа ĕçлемеле пулсан, февралĕн 10-мĕшĕнче çуранисем 117 çын, лашалисем 108 çын çеç ĕçлене.

Йĕпреç парти райкомĕпе райĕçтăвкомĕн вăрман хатерлес ĕçре тивĕçлĕн йертсе пымала.

Дм. Михайлов.

Çыхăну управленинче ĕçлекен Т. Василйева й. Хĕрлĕ Çар уйавĕ тĕлне ПВХО инструкторĕсен курсĕнчен „отлично" паллăпа вĕренсе тухрĕ. Вĕренсе тухнă хыççăн çыхăну управленинче 30 çынран ПВХО кружокĕ организацилерĕ.

Укерчĕк çинче: Т. В. Василйева йулташ испытанире.

Вăрманта лайăх ĕçлерĕç

Чăкăр йалсоветне кĕрекен (Шупашкар р.) „Трудовик" тата „Новая деревня" колхозсем вăрман хатĕрлевĕнчи стахановла уйăхлăха пысăк хастарлăхпа хутшăнчĕç.

„Трудовик" колхоз 500 кубла метр касса хатĕрлес выранне 510 кубла метр, „Новая деревня" колхоз 400 кубла метр касса плана ытлашшипех тултарчĕç. Вăрман ĕçенче уйрăмăнах Николай Василйев, Анна Иванова, Шура Казанкова, Федорова йулташсем тăрăшса ĕçлерĕç.

Çав вăхăтрах „Войков", „Зерно", „Чăваш Коммунĕ" колхозсем вăрман ĕçне тытăнман та.

И. Василйев.

Договорсене пурнăçламаççĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Йăвăр промышленнăçпа вăрман промышленнăç Халăх Комиссариачĕсем Куславкка комбинатне варман тăратма Мари республикинчи Керебељак вăрман пунктне уйăрса панă.

Чăваш республикинчи Халăх Комиссарĕсен Совечĕ кăтартнă тăрăх, комбината валљи вăрман хатĕрленĕ çерте ĕçлеме Сĕнтĕрвăрри районне çирĕплетнĕ. Анчах та ку ĕç районта йапăх пырат-ха. Вăрмана ĕçлеме кайма тунă договора хашпĕр колхозсем вăхăтра пурнăçламаççĕ. Акă Кудемер йалсоветĕнчи „Путь Ленина" колхоз йанварĕн 23-мĕшĕнчех вăрмана ĕçлеме кайма договор тунă пулнă, пайан кунччен те тухса кайман. Ĕсмĕл колхозĕ те (председателĕ С. Григорйев) ку ĕç çине кирле пек пăхмаст. Йалсовет председателĕ Казанов ĕçпе интересленмесĕр ларат, нимĕн те тумаст. Вăл колхозсене нарйад панипех лăпланса ларнă. Кун пек колхозсем татах та пур.

Райĕçтăвкомĕн вăрман хатĕрлес ĕçе йертсе пымала. Йалсоветсене нарйадсем панипех лăпланса лармала мар.

Н. Петров.

Укерчĕк çинче: „Таймыр" пăрçĕмĕрен „Çурçĕр полюсĕ" станци патне папанинцăсене илме кайат.

А. Рапопорт фото-ÿкерчĕкĕ (Сойузфото).

Чăн-чăн ăмăртува тухман-ха

Шупашкар хули Совечĕн финанс пайĕн 1938 ç. пĕрремĕш квартăлта массăлă тÿлевсем тăрăх, займпа страховка укçи тата пĕрлештерне сектортан тухакан тупăш налогĕ пĕтĕмпе 2.888 пин тенкĕ пухмала.

Анчах халљхи вăхăтра çак плана тултарса пырас ĕç пĕре те кăмăла каймала пулса пымаст-ха. Ку тарана çитсе те финанс планне налогсемпе тĕрлĕ тÿлевсем тăрăх 25,7 проц., займ укçине рабочисемпе служащисенчен 36,7 проц., ытти çынсенчен 27,6 процент пухнă. Государствă тупăшĕсем тăрăх та плана начар тултаратпăр. Февралĕн 11-мĕш тĕлне мĕн пурĕ те 38 проц. кăна тултарнă.

Кăçал епĕр финанс планне ăнăçлăн тултарса пыма пултăмăр, Саранск хулинчи (Мордва республик центрĕ) финанс активĕпе социалисăмла ăмăртува тухса, хамăр çине тивĕçлĕ обйазателствăсем илтĕмĕр. Анчах вăл обйазателствăсене çителĕклĕ таран пурнăçласа пымастпăр-ха.

Плана мĕншĕн начар тултаратпăр?

Финанс пайĕ начар ĕçлет. Ку тĕп сăлтав. Финпай йулашки вăхăтра çулталăк ĕçĕн отчотне тăвас тĕлĕшпе пĕтĕмпех кÿлĕннĕ пулнă. Вăл финанс активĕпе тăрăшсах ĕçлеме кирли çинчен манса кайнă. Финанс активне йышлатма тăрăшман. Фининспекторсемпе контролљлĕ постсем финанс планне тĕрлĕ организацисем мĕнле тултарса пынине тĕрĕслесе пымаççĕ. Вĕсен ĕçне финпай йертсе пыман. Финанс пайĕ государствăна тупăш налогĕ вăхăтра куçарса тăман организацисен ĕçне тивĕçлĕн тĕрĕслесе пыман. Ун пек организацисем çук мар, пур.

Февралĕн 15-мĕш тĕлне тупăш налогне тÿлесе татман хисеп 200 пин тенке çитет. Маслопромăн 62.332 тенкĕ, „Кожупряжь" ертелĕн—15.192 тенкĕ, Тир-сăран завочĕн—59.619 тенке, Промкоопстрой ертелĕн—10 885 тенкĕ, 1-мĕш №-лĕ типографин 9 пин тенкĕ, Мињутинри вăрман завочĕн—2.500 тенкĕ, Ачасен комиçси фабрикĕн—2 249 тенкĕ тÿлемеле.

Çак организацисен руководителĕсем государствă умĕнче тăракан хăйсен обйазателствисене вăхăтра пурнăçласа пыма васкамаççĕ, государствăн тупăш планне тултарас ĕçре чăрмантарса пыраççĕ. Ку малашне те çакăн пекех йулма пултараймаст. Тупăш налогне пур организацисен те халех тÿлесе татмала. Тупăш налогне вăхăтра тÿлесе пыманни вăл—пĕр йенчен, хуçалăх организацинчи работниксем хушшинче дисциплинă, финанс ĕçĕнче йĕркелĕх çуккине кăтартат, тепĕр йенчен—хуçалăх организаци хăйĕн промфинпланне тултарас тĕлĕшпе йапăх ĕçленине пĕлтерет.

Акă, „Кооператор" ертелнех илер. Вăл иртнĕ çулталăк хушшинче 80 пин тенкĕлĕх брак кăларнă, 20 пин тенкĕлĕх тулăка кĕрсе йулнă. Вĕсем халĕ те государствă умĕнче тăракан хăйсен парăмне 3000 тенкĕ тÿлесе татман.

Çакăн пек организаци руководителĕсене хăйсене шанса панă ĕç çине тимлĕн пăхма вĕрентес пулат, унсăран ăнăçлăх пулмĕ.

Финанс ĕçĕнче пирĕн лайăх вырăнсем те пур. Хула перекет кассийĕ квартăл планне халех 155.5 процент тултарчĕ. Страховкă укçи тÿлевĕсем тăрăх та квартăл планне 84,1 процент тултарнă. Ку ĕçре уйрăмăнах хĕрарăмсем (пуринчен ытла килхуçи арăмĕсем) нумай пулăшаççĕ. Пурнăçа тата пурлăха ирĕклĕн страхлас тĕлĕшпе пуринчен ытла хĕрарăм-активискăсем ĕçлеççĕ. Сахал мар пулăшаççĕ выранти комсодсем те: Цвилишина (Поликлиника), Чинайева (Йустици Халăх Комиссариачĕ), Славолюбова (Тир-сăран завочĕ) тата килхуçи арăмĕсем — Макаровапа Смирнова йултăшсем. Вĕсем—финанс ĕçĕнчи отличниксем.

Килхуçи арăмĕсем займ укçине пухас ĕçе те активлăн хутшăнаççĕ. Акă, Кирилова, Соколова (Роза Люксембург урамĕ), Смирнова, Макарова (Ленинград урамĕ), Антонова (Заводская урамĕ), Короткова, Собачейева, Соколова, Мосолова т. ыт. те хăйсен урамĕсем, хватерĕсем тăрăх займ укçисене пĕтĕмпех пухса çитерне. Чылайĕшĕ займ укçине пухса çитересси патне çывхарнă. Анчах, çавăнпа пĕрлех, займ укçине пĕр пус та пухманнисем те пур-ха. Ун пеккисенчен Стожаров çине кăтартса памала пулат. Çавăн пекех Гаврилова, Голосницкий, Сверчкова (Комуналљнайа слобода) Григорйева, Бугина йулташсем те займ укçине çине тарсах пухмаççĕ-ха.

Хĕрлĕ Çар 20 çул тултарнă уйава иртернĕ май „ССР Сойузĕн обороннине çирĕплетмелли займ" укçине пухас ĕçе темиçе хут вăйлатас пулат. Хĕрарăм активисткăсен займ укçине пухас тĕлĕшпе квартăл планне сахалтан та 80 процент, хĕрарăмсен кунĕ тĕлне 100 процент тултарас задачă лартмала.

Çитес кунсенчех тата налог хума тивĕçлĕ килхуçисем хăçан мĕн чухлĕ налог тÿлемеллине кăтартса пелтерÿсем алла илеççĕ. Пирвайхи срук тăрăх тÿлеме халех хатĕрленсе тăма кирлĕ. Çак ĕçре уйрăмăнах урам комитечĕсемпе кил управленийĕсем пулăшасси çине шанатпăр. Финанс активĕ, хулари учрежденисемпе организацисен руководителĕсем тата шут ĕçне туса пыракансем, финанс йенĕпе ĕçлекен общественăлă инспекторсемпе контролĕ постсем, финпай аппарачĕ хăйсен ĕçĕнче тивĕçлĕ улшăну тăвасса шанмала. Чăваш республикĕн центрĕн—Шупашкар хулин финплана тултарассинче пример кăтартса пымала.

Й. Золотников.

Малтанхи пулăшу кружокĕ

ЕЛĔК. Вутланта малтанхи пулăшу кружокĕ ĕçлеме тытăнчĕ. Кружока Елĕкри болњницăра ĕçлекен Фомина медсестра йертсе пырат. Занјатисем йĕркелĕ пулса иртеççĕ. Кружок членĕсем малтанхи пулăшу парас ĕçе тимлĕн вĕренеççĕ. Вĕренекенсем ГСО значокĕн нормисене пама хатĕрленеççĕ.

М. Каменев.

Инженер Б. ВОРОБЙОВ

Çурçĕр полюсне кĕрешсе илнин историйĕ

Çĕр çул хушшинче тунă нумай експедицисем хыççăн, вăл експедицисенче нумай çынсем—хăйулă полљар тĕпчевçисем—пĕтнĕ хыççăн, вунтăххăрĕмĕш ĕмĕр вĕçнеле Çурçĕр полюсне çитес, çĕр чăмăрĕн çак вăрттăнлăхлă тата çын çитсе курман районне çутатса парас задачă умĕнче етемлĕх уççи-хушшисĕр вырăна çитсе тăнă пек туйăннă. Хăйĕн пăрлă похочĕсемпе Арктикăшăн паллă адмирал Керс, унăн карапĕсем çĕнĕрен тытăнсан та Девис проливĕн[1] пăрĕсене сирсе тухайман, çурçĕр патне çĕмĕрсе тухайман хыççăн, Британи адмиралтействине хăйĕн çак паллă телеграммине йанă: **„Çурçĕр полюсне çитме çук"**. Çакна хирĕç ответлесе хăйулă сĕнÿсем кăлара-кăлара тăратнă: Çурçĕр полюсĕ çине сывлăш тăрăх çитме сĕннĕ, мĕншĕн тесен темĕн чухлĕ геройла вăй хурсан та унта тинĕс çулĕпе йе йытăсем кÿлсе çитме май килмест, тенĕ. Англири Чейн адмиралпа Коксвелл сывлăш вĕçевçин (1878—80 ç. ç.), Францири чылай сывлăш вĕçевçисен—Дÿпÿиндељ Курăн (1845 ç.) Марешаљăн (1870 ç.) Г. Зилберманăн (1871 ç.), Сивељăн (1871 ç.) т.ыт. пройекчĕсем çавăн пек пулнă ĕнтĕ. Австрири учонăй Пайер (унăн експедицийĕ Франц-Иосиф çĕрне уçнă), хăй Арктикăран таварăнсан çырнă кĕнекинче, 1872—74 çулсенче тÿрех çапла каланă:

„Полюс патне нимĕ йурăхсăр **тинĕс** карапĕсем йарас вырăнне епĕр **сывлăш** карапĕсем йама вăй çитермеле пуличчен полюса çитес тĕлĕшпе тăвакан пикенÿсене пăрахни усăлă пулнă пулĕччĕ", тенĕ. Анчах ун пек сывлăш карапĕсем ун чух пулман, Арктикăна карапсем çинчи експедицисемпе кайасси малалах пулса пынă. Пысăк, тивĕçлипе тивекен чап аслă полљар тĕпчевçин Фритиоф Нансенăн йачĕ çине ÿкет. Нансенăн „Фрам" йатлă пысăк мар йăвăç карапĕ пăрсемпе пĕрле тĕлĕнмеле куçса çÿренĕ. „Фрам" пирĕн Çĕнĕ-Çĕпĕр утравĕсем патĕнчен центрти Арктикă урлă Норвеги çыранĕсем патне куçса каçнă. Çурçĕр полюсĕ çине Нансен та çитеймен. Полюс çине пăрсем тăрăх çитме хăйулăн пикенсе Нансен хăйĕн пурнăçне кăпт кăна çухатайман. (Унăн карапĕ вăл вăхăтшăн рекордлă çурçĕр широтине—85 градусĕпе 57 минутне çитнĕ). Полюс çине çитме унăн тата 400 километр ытла каймала пулнă. Анчах вăл транспољарлă тинĕс йухăмĕ пур иккене кăтартса панипех те калама çук пысăк задачăна пурнăçа кĕртнĕ. Вăл йухăм шăпах ĕнтĕ—унтанпа хĕрĕх çул иртсессĕн пĕтĕм тĕнчипе паллă мухтавпа витĕннĕ 4 совет геройне—Папанина, Кренкеле, Федорова тата Ширшова куçса çÿрекен пăр çинче полюс патĕнчен илсе килнĕ йухăм пулнă.

Çулталăк иртсессĕн, 1897 çулта, Шведи инженерĕ С. Андре тата унпа пĕрле пулнă Н. Стринберг, К. Френкелх Çурçĕр полюсĕ çине сывлăш шарĕпе вĕçсе çитме хăтланса пăхнă. Çавăн пек ĕç тума хăтланса пăхнă чухне çак хăйулă учонăйсем пĕтнĕ.

1909 çулхи апрелĕн 6-мĕшĕнче, 25 çул хушши çине тăрса ĕçленĕ, пайтах вăй хурса тăрăшнă хыççăн, Америкăри паллă полљар тĕпчевçи Роберт Пири хăйĕн виçĕ йулташĕпе пĕрле йытăсем кÿлнĕ çунасем çине ларса, пăр тăрăх, Грант çĕрĕ çинчен Çурçĕр полюсĕ патне çитнĕ, Паллах, унта вăл пит те кĕске вăхăт—темиçе сехет кăна пулнă.

1926 çулхи майăн 9-мĕшĕнче Америкă љотчикĕ Берд икĕ моторлă Фоккер самољотпа полюс тĕлĕнче ик-виçĕ хут вĕçсе çавăрăннă. Берд унта Шпицбергентан вĕçсе пынă. Ун хыççăн виçĕ кун иртсен полюс тĕлĕнче çав Шпицбергентанах вĕçсе пынă „Норвегия" йатлă дирижабљ вĕçсе çавăрăнса çÿренĕ. „Норвегия" çинче чаплă полљар тĕпчевçи Амундсен йертсе пыракан експедици пулнă.

Çавăн пысăкĕш дирижабљ (18.500 кубла метр пысăкĕш) çинчех—„Италия" йатлă дирижабљ çинче тунă тепĕр сывлăш експедицийĕ, 1928 çулта полюс çине çитнĕскер, инкеклĕн вĕçленнĕ. Кайала таварăннă чухне, майăн 23-мĕшĕнче, Шпицбергенăн çурçĕр йенчи çыранĕсен çывăхĕнче дирижабеле йăвăр авари пулнă, вăл сасартăк хăвăрт айалала аннă чухне пăр çине пырса çапăннă. Дирижабљ ултă çынпа çÿлеле вĕçсе кайса пĕр хыпарсăр çухалнă, дирижабљ пăр çине пырса çапăннă чух Помелла мотрис вилнĕ, 10 çын пăр çине ÿксе йулнă. Вĕсене пурне те пекех пирĕн хĕрлĕ йалавлă совет пăрçĕмĕренĕ „Красин" хăтарнă.

Совет пăрçĕмĕренĕсем—„Красин" тата „Малыгин" тунă геройла ĕçсем — унта ăслăлăхпа тĕпчев ĕçĕсене, хуçалăхлă ĕçсене анлăн сарса йарас умĕн тунă, вĕсем пуласса пĕлтерсе тăнă ĕçсем пулнă. Совет çĕршывĕн социалисăмла индустрийĕ вăл ĕçе халиччен никам курман хăвăртлăхĕсемпе малала туса пыма май пачĕ. Çĕршыв Арктикăна хăватлă пăрçĕмĕренсемпе самољотсем йарат, унта çулсеренех çĕнĕ полљар станцийĕсем тăваççĕ. Совет влаçĕччен вĕсем пурĕ те 4 çеç пулнă, халљ вĕсем—57. Сăмахран, Октябĕр революцийĕ пуличченхи вăхăтра çын иртсе тухайми „пăрлă михĕ" тесе шутланнă Карски тинĕсĕнче картинă палламала мар улшăнчĕ. Хĕрĕх çул хушши—1874 çултан пуçласа 1914 çула çитиччен—унăн урлă çулталăкне икĕ хутчен (вăтам шутпа) ытла та мар ишсе каçнă. 1930—31—32—33-мĕш çулсенче кăна ун урлă 135 хут ишсе каçнă. Октябĕр революцийĕччен Арктикăра самољотпа усă курма пĕр хут çеç (1914 çулта) пикенсе пăхнă. Халљ ĕнтĕ Арктикăра вĕçекен самољотсем унта çулсеренех çĕршер пин километр вĕçевсем тăваççĕ.

„Сибирйаков" Совет Сойузĕн çурçĕрти çыранĕсем хĕррипе пирвайхи хут пĕр навигацире ишсе тухса историлĕ рейс тунă хыççăн, правителствă йышăннă постановлени тăрăх ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнче Çурçĕр тинĕс çулĕн Тĕп управленине организациленĕ. Партипе правителствă çĕнĕ управленине Шурă тинĕс патĕнчен пуçласа Берингов проливĕ патне çити тăсăлса выртакан Çурçĕр тинĕс çулне хывас, ăна оборудованин тăвас тата лайăх йĕркелĕхре тытса тăрас задачă лартрĕç. Çав организацийĕх тата Арктикăн калама çук вăрăм тăсăлса выртакан çыранĕ тăрăхри çутçанталăк пуйанлăхĕсене шыраса тупас, вĕсенчен кирлĕ йапаласем хатĕрлес ĕçе туса пыма хушнă. Пирвайхи çулсемех Арктикăн совет секторĕнче халиччен палла пулнă пуйанлăхсемсĕр пуçне—пулăсăр, пурнăçра усă курмали усăлă тискеркайăксемсĕр пуçне тата урăх пуйанлăхсем (полиметаллă вырăнсем, çĕркăмрăк выртакан вырăнсем, нефт) пур иккенне палăртма май пачĕç. Иулашкинчен тата Архангељскпа Владивосток хушшинче тинĕс карапĕсем паллă вăхăтсенче пĕрмайах, тÿрех çÿрессине чăн-чăн пуçламăшне тунă.

Чељускинцăсене хăтарас тĕлĕшпе пулса иртнĕ кампани, пароход путнă вырăна васкавлăн вĕçсе пынă 7 самољот пăр çинче пулнă 100 çынтан тăракан пĕтĕм лагере материк çине куçарни çакна кăтартса пачĕ: совет морйакĕсем Арктикă тинĕсĕсене алла илнĕ пекех, совет љотчикĕсем унăн сывлăшне алла илчĕç.

Çурçĕр полюсне—унăн районĕнче ăслăлăх ĕçĕсем организацилес тĕлĕшпе—чăнниех **кĕрешсе илес** задачăна пурнăçа кĕртмешкĕн социалисăм çĕршывĕ кăна вăй çитерчĕ.

Совет çĕршывĕн тăватă хăватлă самољочĕ арктикăн чи чĕрине вĕçсе кайса тунă калама çук чаплă ăслăлăхлă-тĕпчевлĕ рейс тата 1937 çулхи майăн 21-мĕшĕнче куçса çÿрекен пăр çинче полљар станци организацилени Арктикăна тĕпчесе вĕреннес тата алла илес ĕçре етемлĕхе йалтах çĕнĕ тапхăр уçса пачĕ. Вĕсем ку ĕçе капиталисăмлă тĕнче курман-пĕлмен çÿлĕ вырăна çĕклерĕç. Çав çурах, унран та кайарах вăхăт иртсенех, експедици ĕçĕ тата тепĕр çĕнĕ, калама çук чаплă сывлăш рейсĕ тума май пачĕ: Çурçĕр полюсĕ тĕлне каллех совет самољочĕ пырса тухрĕ. Вăл самољот çинче Совет Сойузĕн Геройĕсем—Чкалов, Бељаков тата Байдуков йулташсем пĕр лармасăр Мускавран Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсене вĕçсе тухрĕç. Тĕнчере чи пĕрвайхи хут пĕтĕм Арктикă урлă сывлăшра вĕçсе каçрĕç. Çак вĕçеве тăвасси халиччен фантази пек туйăнса тăнă. Çак вĕçевпе вара ССР Сойузĕпе Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсем хушшинчи транспољарлă çул уçăлчĕ. Кун хыççĕн уйăх та иртмерĕ, тепĕр 3 герой—Громов, Йумашев тата Данилин йулташсем çавăн пек самољот çинчех ССР Сойузĕпе Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсем хушшинче тата ытларах чаплă вĕçев турĕç, вĕсем инçене вĕçес тĕлĕшпе тĕнчери çĕнĕ рекорда турĕç.

Çапла вара куçса çÿрекен полљар станцин геройла ĕçĕ ытти ĕçсене сарса йама калама çук пысăк майсем туса пачĕ, вĕсемпе епĕр çийĕнчех усă куртăмăр. Папанин, Ширшов, Федоров тата Кренкел йулташсен ĕçĕ кашни кунах ăслăлăхлă Арктикă çинчен çĕнĕрен çĕнĕ хаклă материалсем парса тăчĕ. Вĕсем кунсерен парса тăнă метеосводкăсем пĕтĕм тĕнчипех çанталăк прогнозĕсене тăвас ĕçре пысăк та паха елемент пулса тăчĕç. Тĕнче „Çурçĕр полюсĕ" станци тăвакан ĕçсене куллен-кун вĕçĕ-хĕррисĕр пысăк тимлĕхпе сăнаса пыма тытăнчĕ. Унăн ăслăлăхри çитĕнÿвĕ Нансен пăрсемпе пĕрле 3 çул куçса çÿренинчен те темиçе хут иртсе кайасса шантарат. Фритиоф Нансен çакăн пек експедици çинчен ĕмĕтленме кăна пултарнă...

¹ Гренландин çурçĕр-хĕвеланăç пайĕпе Елисмер çĕрĕ хушшинче.

Китайри вăрçă

ÇУРÇĔР КИТАЙРА

ХАҢКОУ, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Хенаң провинцин çурçĕр пайĕнче, Бейпин—Хаңкоу чукунçул секторĕнче çапăçусем татах хыттăн пулса пыраççĕ. Йапони çарĕсен тĕп вăйĕсем хĕвеланăçнеле Даокоу—Цинхуа чукунçулĕ тăрăх малала кайма хăтланаççĕ. Йапони çарĕсене кăнтăрала малала куçма вăхăтлăха чарса лартнă.

Йапони тылĕнче партизансен отрйачĕсен активлăхĕ кашни кунах ӳссе пырат. Партизансем Цинфын хулине (Даминран кăнтăр йеннеле—Хебей провинци кăнтăр пайĕнчи хула) йышăннă. Çав хулана илнипе вĕсем Йапонин Нейхуанпа Пуйан хушшинчи çыхăнуне татнă. Çавăн пекех партизансем Даокоуна та хăйсен аллинче тытса тăраççĕ.

Февралĕн 20-мĕшĕнче Цзинин хули патĕнче пысăк çапăçу пулса иртнĕ. Кăнтăрла Йапонин 800 çынлă çарĕсем 10 орудипе тата танксемпе Китай çарĕсене хирĕç çапăçма пуçланă. Çапăçу кунĕпех пынă. Йапони отрйадĕнчи салтаксем çурри ытла вилнĕ. Китайцăсем йенчен батаљйон командирĕсем икĕ çын пĕтнĕ.

Сентрал Њйус агенствин корреспонденчĕ Лиңфыңрен пĕлтернĕ тăрăх, Китай çарĕсем Йапони çарĕсен наступленине сирсе пăрахнă. Йапони çарĕсем февралĕн 20-мĕшĕнче Шуанчичжең çине (Çаоиран 40 километр кăнтăрпа хĕвеланăçнеле, Шаңси провинци кăнтăрпа хĕвеланăç пайĕнче) наступлени тума пуçланă пулнă. Наступленире Йапони салтакĕсем 2.000 çын ытла хутшăннă. Йапоноцăсем пысăк çухатусем тунă.

ХАҢКОУ, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Таңцзиң çывăхĕнче февралĕн 19-мĕшĕнче каçхине Йапони çарĕсемпе Китай партизанĕсем хушшинче пысăк çапăçу пулса иртнĕ.

Савна пула Таңцзиңре вăрçă чухнехи пек йĕрке туса хунă. Чукунçул станцинче тата урамсенче тăпра тултарнă михсенчен баррикадăсем туса лартнă. Хулан тĕрлĕ пайĕсенче çӳлеле пемелиң (зенитлă) тупăсем ларта-ларта тухнă. Каçхине 11 сехет иртсен урампа пыракан çынсене пурне те ухтару тăваççĕ.

ВАТАМ КИТАЙРА

ХАҢКОУ, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Таңцзиң—Пукоу чукунçулĕн кăнтăр участкинче фронт линийĕ Хуайхе йуханшыв районĕнче Хуайӳаң, Беппун, Фынйан патĕнчен иртсе пырат.

ШАНХАЙ, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Тайху кӳллинчен кăнтăрали районта партизансем Чансинпе Хучжоуна хаљ те йĕри-тавра хупăрласа тăраççĕ. Йапонцăсем çав района Ханчжоуран подкрепленисем илсе пыраççĕ, анчах вăл подкрепленисем çине Китай партизанĕсем тапăнсах пыраççĕ. Февралĕн 20-мĕшĕнче Ханчжоуран 10 километрта Китай партизанĕсем Йапонцăсен 100 çынлă отрйачĕ çине сисмен хушăран тапăнса цĕтĕмпех пĕтернĕ. Партизансем çар снарйаженисем нумай туртса илнĕ.

Нанкинран кăнтăр йенчи районра çапăçусем Уху хулинчен кăнтăрпа хĕвеланăç йенче пыраççĕ. Китай çарĕсем кунта Гуйтаңчене йышăнна.

КĂНТĂР КИТАЙРА

ШАНХАЙ, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Февралĕн 20-мĕшĕнче Йапонин тăватă çар карапĕ Боккатигрис форчĕсем çине пенĕ. Китай чаçĕсем йапонцăсем çине хыттăн пенипе ответленĕ. Хирĕ-хирĕç пĕр сехете йахăн персе тăнă хыççăн, китайцăсем Йапонин икĕ çар карапне пысăкканах сийен тунă. „Дамейваңбао" хаçат ĕнентерсе пĕлтернĕ тăрăх, çав карапсем иккĕшĕ те шыва путнă.

Ӳкерчĕк çинче: Кийев Çар округĕнчи Н-ски артилери чаçĕнчи курсант отличник И. И. Цепов йулташ оруди патĕнче (1938 çулхи йанвар уйăхĕнче тунă ӳкерчĕк) (Сойузфото)

Колхозник календарĕ

Колхозпа совхоз литературин государствă издателстви („Сельхозгиз") „1938 çулти колхозник календарĕ" кăларнă.

74,5 пичет листилĕ кĕнекере пирĕн тăван çĕршывăн историнчен, социалисăмла халăх хуçалăхĕ, ăслăлăхпа техникă, литературă, искусствă т. ыт. çинчен те нумай интереслă сведенисем пур.

Календар тăватă тĕп пайа уйăрăлат. Пĕррĕмĕш—умĕнхи—пайĕнче ССР Сойузĕн Конституцине, йалхуçалăх ертелĕн примерлă уставне тата хамăр тăван çĕршывăн економикăлă-географилĕ пысăк очеркне пичетленĕ.

Кĕнекен календарлă пайне иккĕмĕш уйрăмра вырнаçтарнă. Çулăн кашни кунне пĕр страницă панă. Вăл страницăра ытларах историлĕ кунсем йе йалхуçалăх ĕçĕсен срукĕ, çинчен статйапа [illegible] заметкăна кăтартнă. Кашни уйăха йалхуçалăх ĕçĕсен календарĕпе чысланă.

Унтах Ленин, Сталин, Молотов, Ворошилов йулташсен доклачĕсенчен, самахĕсенчен тата произведенисенчен чылай сыпăксем, аслă çынсен: учонăйсен, писателсен т. ыт. те биографисене панă.

Виççĕмĕш—справкă пайĕ. Тĕрлĕ справкăлă сведенисемсĕр пуçне кунта агротехникă, зоотехникă, куљтурă тата йала ыйтувĕсемпе статйасем пур.

Йулашкинчен, тăваттăмĕш—информаци пайĕ. Вăл тĕрлĕ ыйтусемпе пуйан информаци парат.

Справкă тата информаци пайĕсем нумай йенлĕ. Кунта календара вулакан совет влаçĕ 20 çул хушшинче тунă çĕнтерӳсен тĕп цифрисене, астрономипе метеорологи ыйтувĕсемпе çырнă паллă статйасене, йалхуçалăхĕн (сад-çимĕç, пахча-çимĕç, чечек туса илес, ухата тата пулă тытас ĕççен) уйрăм отраслисем тăрăх ĕççен календарĕсене, ССР Сойузĕн йалхуçалăх машинĕсем тăвас ĕçĕн сведенисене т. ыт. те тупса вулама пултарат. Кунсăр пуçне колхозниксене кирлĕ—„Врач пыраччен малтанхи пулăшу", „Хĕрарăм-колхозницăсене пулăшу пани çинчен" (ача çуратакансене пулăшу парасси, нумай ачалă амĕшсене государствăран пулăшу парасси, алиментсем), „Ача амăшĕн памйатнике" йатлă статйасем пур.

„Практикăлă канашсем" йатлă уйрăм календара вулакана повар ĕçĕпе, пахча-çимĕç, сад-çимĕç тата çырласем туса хатĕрлес ĕçпе паллаштарат, пăрлă нӳхреп, нӳхреп, парник, колхоз мунчи мĕнле тумали çинчен каласа парат.

Малала тĕрлĕ ĕçсемпе асра тытмалисем: пушара хирĕç кĕрешес, сывлăшран тапăннине хирĕç, химилĕ тапăннине хирĕç сыхланас ĕç, процента, метрлă виçесене, талккăшпа мĕнле шутласа кăларасси, çĕр ĕç участкин планне мĕнле тăвасси, çĕр участки, пӳлĕм, сарай т. ыт. талккăшне мĕнле шутласа кăларасси, выљăх-чĕрлĕхсен чĕрĕ тайăмне мĕнле пĕлесси.

Календаре 100 пин екземпљар пичетлесе кăларнă. Хакĕ, хытă хупăпа, 10 тенкĕ.

Ку календар колхозсемпе колхозниксемшĕн, паллах ĕнтĕ, сĕтел çинче тăмали кирлĕ кĕнеке.

(ТАСС).

Изобретателсен совечĕ

Нумайах пулмасть Куславкка комбинатĕнчи изобретателствă совечĕн суйлавĕ пулса иртрĕ. Изобретателсен совечĕн председателне стахановца Новиков йулташа суйларĕç.

Суйлав хыççăн вăхăт нумайах иртмерĕ пулин те, Новиков йулташ изобретателствăпа рационализаци ĕçне тĕпренех çĕнетсе йĕркелерĕ. Хаљхи вăхăтра изобретателсен советĕнче 37 çын тăрат. Вĕсенчен 12 стахановцăсем. 1938 çулхи йанварĕн 1-мĕшне комбиначĕпе 58 сĕнӳ панă. Вĕсенчен 21 сĕнӳне пурнăçа кĕртме йышăннă та ĕнтĕ, 15-шне сӳтсе йаваççĕ тата 15-шне пурнăçа кĕртнĕ.

Рабочисен сĕнĕвĕсене пухас ĕçре цех начаљникĕсем те пысăк пулăшу параççĕ. Акă йăвăç каскалакан цех начаљникĕ Модин йулташ хăй цехĕнче 20 сĕнӳ пăхса тухнă.

Изобретателсен совечĕн уйрăм кабинет пур. Унта тĕрлĕрен техникăлă литературăсем çителĕклĕ. Кабинет çумĕнче 3 кружок ĕçлет, кружоксенче пĕтĕмпе 36 çын вĕренет.

Рационализаторсемпе изобретателсем пурте пĕр-пĕрипе ăмăртса ĕçлеççĕ, Петр Модин икĕ çул хушшинче 20 сĕнӳ панă. Вăл сĕнӳсем тăрăх комбинат 120.000 тенкĕ перекетленĕ. Çавăн пекех тата Лодкин йулташ та 25.000 тенкĕ перекетлеме май паракан сĕнӳсем панă.

Куславкка комбинатĕнчи изобретателсен совечĕ Çĕмĕрле комбинатĕнчи изобретателсен совечĕпе социалисăмла ăмăртса ĕçлет. Ку тĕлĕшпе вара Çĕмĕрле комбиначĕ кайра пырат. Акă тĕслĕхсем: йанварĕн 1-мĕшне совет членĕнче 45 çын тăрат. Вĕсенчен 15 стахановцăсем. Ку ĕçе малтанах Саљников йулташ туса пынă. 1937 çулхи ийуң уйăхĕнче Саљников ĕçе никама парса хăвармасăрах тухса кайнă пирки çак 9 уйăх хушшинче мĕн пурĕ те икĕ канашлу çеç туса иртернĕ. Пĕтĕмпе 1937 çулта 187 сĕнӳ панă, вĕсенчен 32-шне пурнăçа кӳртме йышăннă. Цех начаљникĕсем рабочисен сĕнĕвĕсене хак памасăр тăнисем те пур, сĕнӳсене çухатаççĕ (урапа цехĕ).

Ăмăрту договорĕ тăрăх Çĕмĕрле комбинатĕнчи изобретателсен совечĕн çулталăкра 250.000 тенкĕ перекет паракан сĕнӳсем пухмала. Вĕсем 123.120 тенкĕлĕх çеç пухнă.

И. Сидоркин.

Ирĕклĕ, коллективлă страхлас ĕçе вăйлатар

Партипе правителствă ĕççыннисен пурнăçпа йала условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе иртерекен нумай ĕçсенчен пĕри вăл ĕççыннисен пурнăçне ирĕклĕ, коллективлă страхласси.

Ĕççыннисен пурнăçне ирĕклĕ, коллективлă страхлас тĕлĕшпе халĕ ССР Сойузĕн Финанс Халăх Комиссариачĕ çĕнĕ йĕрке кăларнă. Çĕнĕ йĕрке, сăтăрла тунă кивĕ йĕрке пек мар, пур ыйтусем тăрăх та уççăн ăнлантарса парат, ĕççыннисен пурнăçне ирĕклĕ, коллективлă страхлас ĕçе лайăх йĕркелеме май парат.

Финанс органĕсен, финанс активĕн çак çĕнĕ йĕркесем çинчен ĕççыннисем хушшинче тĕплĕн ăнлантарса парса, пур коллективсенче те пурнăçа страхлас ĕçе тытăнмала.

Çак ĕçе пуçарса йарас майпа Хула Комитечĕ тата Хула совечĕпе финанс пайĕ хулари страхинспекципе пĕрле февралĕн 15-мĕшĕнче комсод членĕсен, страхлас тĕлĕшпе ĕçлекен уполномочăннăйсен канашлуне ирттерчĕ. Канашлура 45 çын пулчĕç.

Шупашкар хулинчи Госстрах инспекторĕ Новикова йулташ ĕççыннисен пурнăçне ирĕклĕ, коллективлă страхлас тĕлĕшпе кăларнă çĕнĕ йĕрке çинчен ăнлантарса пачĕ.

Доклад хыççăн, хăйсен ĕçĕнчи опытсем çинчен каласа кăтартас майпа, Раса (Садвинтрест) Цвилишина (Поликлиника) Гонопилов (Типографи), Славолӳбина (Тир-сăран завочĕ) т. ыт. йулташсем те тухса каларĕç. Вĕсем пурте: çĕнĕ йĕрке пурнăça страхлас йĕнĕпе пур рабочисемпе служащисен коллективĕсене те çавăрса илме май парат, терĕç.

Йулашкинчен канашлу çакăн пек решени йышăнчĕ:

Хулари комсодăн вырăнти комсодсен ĕçне тĕрĕслесе тухмала, комсодсем çук çĕрте ăна халех организацилемеле.

Финанс тата страхлас йĕнĕпе ĕçлекенсен активне çирĕплетмеле, вĕсемпе пурнăça страхлас ыйтусем тăрăх час-часах семинарисем туса иртермеле.

Кайа йулса пыракан коллективсене пулăшма лайăх ĕçлекенсенчен, активиссенчен йулса пыракансене пулăшакан бригадăсем тумала.

Ĕççыннисен пурнăçне страхлас тĕлĕшпе кăларнă çĕнĕ йĕрке çинчен кашни коллективрах тĕплĕн ăнлантарса парас пулат. Кашни ун çинчен пĕлсе тăтăр.

Çак ĕçсене пурне те профсойуз тата комсомол организацийĕсемпе пĕрле туса иртермеле. Ĕç меслечĕ —социалисăмла ăмăрту пулмала. Çĕнĕ йĕрке тăрăх ĕçлесе пурнăça страхлассине рабочисемпе служащисене ытларах хутшăнтармала.

И. З.

Пĕтĕм тĕнчери профсойузсен пĕрлĕхĕшĕн

ПАРИЖ, февралĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Февралĕн 18-мĕшĕнче Парижре Йапонине бойкот тăвас тĕлĕшпе пулнă пĕтĕм тĕнчери конференци решенийĕсем пирки пысăк митинг пулса иртнĕ. Тухса калакансем Йапони империализмĕн мирлĕ Китай халăхне вăрçăпа пĕтерекен агреççине хыттăн хирĕçленĕ.

Кашен коммунист-сенатор Лондонри конференцин решенийĕсем çинчен пĕлтерсе, çак конференци решенийĕсене организацилĕн пурнăça кĕртме кирлине кăтартса панă.

„Пĕтĕм тĕнчипе рабочи клас пĕрлĕхне тăвассине пурнăçлас пулат,—тесе каланă Кашен,—Йапони таварĕсене бойкот организацилемеле тата Йапонине туртарса пыракан таварсем çине хаклă пошлинă хурассине пурнăçламала". Кашен Марçелри докерсем Йапони пароходĕсем çине товар тийеме пăрахнине палăртса хăварнă.

Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн секретарĕ Москатов сăмах тухса каланă, ăна нумайччен оваци тунипе кĕтсе илнĕ. Вăл çапла каланă:

„Совет Сойузĕн ĕççыннисем тата вĕсен профсойузĕсем—чи хастарлă, чи вĕçне çити, чи чĕререн тăракан мир тусĕсем пулса тăнине пĕтĕм тĕнче пĕлет.

Совет Сойузĕнчи халăхсем мир тусĕсем пĕрлешсе мир ĕçне чăннипех те тытса тăма пултарнине пысăккăн шанаççĕ, мĕншĕн тесен мир вăйĕ вăрçă вăйĕнчен виçесĕр нумайрах. Мире тытса тăрас тĕлĕшпе чĕререн интересленекен пур халăхсен вăйĕ пĕрлешни çеç агрессорсене çăварлăхлама пултарат.

Нумайах пулмасть совет профсойузĕсем вăрçă хăрушлăхне хирĕç тата фашисăма хирĕç кĕрешес йалав айĕнче пĕтĕм тĕнчери професçилĕ йухăмĕн пĕрлĕхне туса хума пĕтĕмпех хатĕр пулнине кăтартса пачĕç. Ку вăхăтченех пĕтĕм тĕнчери рабочисен йухăмĕн конçервативлă елеменчĕсем чăн-чăн пĕрлĕхе тăвассине хирĕçлеççĕ, вăрçăпа фашисăма хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе пĕрлĕхлĕ фронт тăвассине хирĕçлеççĕ пулсан, ку вара совет профсойузĕсен айăпĕпе мар пулнă.

Мускавра совет профсойузĕсен делегацийĕ—Шверник, Николайева, Москатов тата профсойузсен пĕтĕм тĕнчери пĕрлешӳвĕн делегацийĕ—Жуо, Шевенељс Штољц алă пуснă документра çакăн пек положенисем пур:

1) Вăрçăпа фашисăма хирĕç рабочи класăн кĕрешӳне вăйлатас тĕлĕшпе профсойузсен пĕтĕм тĕнчери пĕрлешӳвĕн тата хастарлăрах ĕçлесе пырасси;

2) Вăрçăпа фашисăма хирĕç пропагандăпа агитаци пур меточĕсемпе те усă курасси (рабочисен пухувĕсем, прессă, радио, кино т. ыт те);

3) Пур çĕршывсенче те рабочи класăн, агрессор-государствăсене хирĕç санкцисем организацилесси; пароходсем çине таварсем тийеме килĕшменни, çак çĕршывсем валљљи паллă таварсене илсе кайма килĕшменни;

4) Испанипе Китайа вĕсен агрессорĕсене хирĕç пулса пыракан кĕрешӳре чăннипех пулăшасси;

5) Мĕн пур çĕршывсенче те пĕрлĕхлĕ халăх фронтне тата профсойузсен пĕрлĕхлĕ фронтне çирĕплетсе тата малала вăйлатас тĕлĕшпе пулăшасси.

Çак пайĕсем çинче ĕнтĕ совет профсойузĕсем профсойузсен пĕтĕм тĕнчери пĕрлешӳне кĕме хатĕр пулса килĕшрĕç. Анчах профсойузсен пĕтĕм тĕнчери пĕрлешӳвĕ çак условисене йышăнманни паллă.

Çакă ĕнтĕ профсойузсен пĕтĕм тĕнчери пĕрлешӳвĕн хăшпĕр руководителĕсен сăмахĕсем ĕçрен уйăрăланине кăтартса паракан тĕслĕх пулса тăмасть-и ха? Москатов хăйĕн сăмахне пĕрлĕхлĕ халăх фронтне тата профсойузсен пĕрлĕхне çирĕплетме чĕннипе пĕтернĕ.

Пултарулăх ӳсет

Чăвашсен 2-мĕш колхоз театрĕ пуçланнăранпа 2 çул иртрĕ. Çак 2 çул хушшинче театр чылай çитĕнӳсем турĕ.

Малтанхи вăхăтра театрăн художествăлă вăйĕ çителĕклĕ пулман. Мĕншĕн тесен, артиссем нумайĕшĕ колхозсенчен пухăннăскерсем çеç пулнă. Вĕсене сценă ĕçĕпе паллаштарас тĕлĕшпе нумай ĕçлеме тиврĕ. Хаљхи вăхăтра театрăн художествăлă вăйĕ ӳссе çирĕпленсе пырат. 1937 çулта Шупашкарти театр училищине вĕренсе пĕтернĕ 3 артис хутшăнчĕ. Ĕлĕкхи артиссем те хăйсен пĕлĕвĕсене, пултарулăхĕсене нумай ӳстерчĕç. Артиссен пултарулăхне, пĕлӳлĕхне хăпартас тĕлĕшпе театрăн художествăлă руководителĕ В. Фролов йулташ тăрăшса ĕçлет. Театр çумĕнче тĕрлĕрен кружоксем ĕçлеççĕ. Вĕсем çамрăк артиссене ӳсме пулăшаççĕ. Артиссен пурнăçĕ те аванлансах пырат. Çавăнпа ĕçленĕçемĕн ĕçлес килет. Постановкăсем ăнăçлă иртеççĕ. Театр 1937 çулхи финанс планне 120 проц. ытла тултарчĕ.

Театр кăçалхи сезонра П. Н. Осиповăн „Айдар" пйесине лартса, хăйĕн çитĕнĕвне кăтартрĕ. Çак кунсенче тутарларан Белов куçарнă „Тупа" йатлă пйесăна лартат. Ун хыççăн классиксенчен Островскин „Не было ни гроша, да вдрук алтын" йатлă пйесине лартма шутлат.

Театрта музыкă ĕçне Н. Чернышев йĕркелесе йертсе пырат. Театрта Чернышев ĕçлени пирĕн театршăн пысăк вăй пулса тăрат. Вăл постановкăсене хăй çырнă илемлĕ музыкăсемпе илемлетет. Вăл çырнă çĕнĕ йурăсем—„Песня о Сталине", „Имя Сталина—наше знамя", „Кремль", т. ыт те илемлĕн йанăраççĕ.

Колхоз театрĕсен кăçалхи фестивалĕнче пирĕн театр 1-мĕш вырăна тухассишĕн тăрăшат. Çак шухăша кашни артисах пуçра тытса, рољесене пысăк пахалăхлă, ĕненӳлĕн выљама тăрăшаççĕ.

Артис М. Кубенов.

„Спартак" обшчестви

ЙЕТĔРНЕ. Профтехшкул çумĕнче „Спартак" обшчестви организацилерĕç. Обшчествăна физкуљтурăпа вĕрентекен Сапожников йулташ йертсе пырат.

Иртнĕ кунсенче обшчествă хулари йĕлтĕрçĕсен ăмăртувĕнче иккĕмĕш вырăн йышăнчĕ. Хаљ Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарнă тĕле ГТО значокĕн хĕллехи нормисене параççĕ.

М. Могонин.

Йалти перекет касси

ЙЕТĔРНЕ. Ĕççыннисен пурнăçĕ пуйанланса, куљтурланса пынă май, вĕсем перекет кассипе укçа хывасси те ӳссех пырат.

Шăмат йалĕнчи перекет кассинче 1937 çулхи йанварĕн пĕррĕмĕш тĕлне ĕççыннисем хывнă укçа 25.735 тенкĕ те 65 пус пулнă. 1938 çулхи йанварĕн пĕррĕмĕшне вăл 40.998 тенкĕ те 32 пуса çитнĕ. Укçа хывакансен хисепĕ 1938 çулхи йанварĕн пĕррĕмĕшне 86 çынна çитнĕ.

Ĕççыннисем хăйсен укçисене перекет кассинче хушсах пыраççĕ. Çак майпа вĕсем процент та чылай илеççĕ. 1937 çулта 884 тенкĕ те 94 пус процент тӳленĕ.

Перекет кассине 1938 çулхи йанварĕн 1-мĕшпе февралĕн 8-мĕш хушшинче 8.998 тенкĕ те 94 пус хывнă. Кассăна укçа хывакансем çак хушăра 8 çын хутшăннă.

1937 çулта перекет касси плана 127,2 процент тултарнă.

Д. Николайев.

Ача çуратмали çурт

ШĂХАСАН. Уйкас Кибекри Тељман йачĕпе тăракан колхоз ача çуратмали çурт туса пĕтерчĕ. Çурт виçĕ пӳлĕмлĕ. Икĕ койкă вырнаçтарнă. Акушеркă та килнĕ.

А. Шорников.

Кружок авторитечĕ ӳсет

Çĕрпӳри фељдшер шкулĕ çумĕнче хор, литературă, драмă, физкуљтурă, фото ташă кружокĕсем пур. Кружоксем йĕркелĕ ĕçлеççĕ. Уйрăмăнах драмкружок аван ĕçлет. Ку кружок 4 çул хушши ĕçлет ĕнтĕ. Унта 42 çын хутшăннă.

Кăçал кружок 5 спектакљ лартса пачĕ. Кружок членĕсем — Посадский, Лапина, Орлов, Алексейев йулташсем лайăх выљама вĕренчĕç.

К. Михайлов.

Кĕскен

Çĕрпӳри колхоз çамрăкĕсен шкулĕнче хурт-хăмăр ĕрчетме вĕренмели 2 уйăхлăх кӳрс уçăлчĕ.

Курсра 31 çын вĕренет.

А. Иванов

Февралĕн 18-мĕшĕнче Шупашкарти коммуналлă-строителствă техникумĕнчи шахматиссемпе кооператив техникумĕнчи шахматиссем хушшинче 9 доска çинче шахмăт матчĕ пулса иртрĕ.

Матч 7 : 2 шутпа стройтехникумри шахматиссем çĕнтернипе пĕтрĕ.

Г. Иванов.

Февралĕн 21-мĕшĕнче Шупашкарта райсойуз инструкторĕсен 3 ернелĕх курсĕ ĕçлеме тытăнчĕ. Курсра вĕренме кашни районран пĕрер инструктор—мĕн пурĕ 20 çын килнĕ. Вĕсем пурте кооператив ĕçĕнче ĕçлекенскерсем.

Дм. Иванов.

Йĕлтĕр похочĕ

Февралĕн 17—19-мĕшĕсем хушшинче Çĕрпӳри йалхуçалăх техникумĕнчи чи лайăх йĕлтĕрçĕсем Çĕрпӳ—Сĕнтĕрвăрри—Çĕрпӳ маршрутпа йĕлтĕрпе тухрĕç. Переходра 10 студент-йĕлтĕрçĕ хутшăннă. Вĕсем Сĕнтĕрвăрринчи çĕрйĕркелӳ техникумĕпе Çĕрпӳри йалхуçалăх техникумĕ хушшинчи социалисăмла ăмăрту договорне мĕнле пурнăçа кĕртнине тĕрĕсленĕ.

Г. Алексейев.

Иккĕмĕш пйатилеткă (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Государствă шалти займĕ

Проигрышсăр кăларăм

Ултăмĕш тиражăн таблици

Тираж 1938 çулхи февралĕн 17 тата 18-мĕшĕнче Куйбышев хулинче пулса иртнĕ.

Иккĕмĕш пйатилеткă (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) займĕн проигрышсăр кăларăмĕнче 200 разрйад. Таблицăра кăтартнă серисен тата облигацисен номĕрĕсем займăн пур 200 разрйачĕсенче те выљаса илнĕ.

Таблицăра кăтартнă выигрышсем çĕршер тенкĕлĕх облигацисем çине тиveççĕ. 50, 25 тата 10 тенкĕлĕх облигацисем çĕр тенкĕлĕх облигаци пайĕсем пулаççĕ. Кунашкал облигацисен пайĕсем çине тухнă выигрыш укçине те иккĕмĕш, тăваттăмĕш, вуннăмĕш пайĕсене шутласа тӳлеççĕ.

ОБЛИГАЦИСЕН ÇАК НОМЕРĔСЕМ ÇИНЕ ВЫИГРЫШ ТУХНĂ.

Çерисен №№	Облигацийĕн №№	Выигрыш тухнă	Çерисен №№	Облигацийĕн №№	Выигрыш тухнă
00106	23*)	500	08260	1—50	150
00142	1—50	150	08363	40*)	500
00178	1—50	150	08605	07*)	500
00271	20*)	500	08868	07*)	500
00368	05*)	500	09076	10*)	3000
00519	40*)	500	09156	28*)	500
00691	1—50	150	09335	1—50	200
00785	17*)	500	10235	1—50	200
00893	39*)	500	10264	1—50	200
01319	1—50	150	10732	42*)	500
01416	19*)	500	10852	1—50	200
01520	1—50	150	[illegible]4282	39*)	500
01562	1—50	200	11402	1—50	200
01677	50*)	500	11499	08*)	500
01889	1—50	150	11638	44*)	500
01926	47*)	500	12271	31*)	500
02216	1—50	200	12663	1—50	150
02299	1—50	150	12724	1—50	150
02414	1—50	200	12781	18*)	500
05234	33*)	1000	13473	1—50	150
03204	1—50	200	13747	17*)	500
03509	1—50	150	14098	1—50	200
03651	16*)	500	14110	1—50	150
03693	1—50	150	14177	1—50	150
03795	36*)	500	14255	1—50	150
03863	46*)	500	14511	08*)	500
04031	46*)	500	15615	1—50	200
04053	1—50	150	15696	1—50	200
04181	1—50	150	15935	1—50	200
04341	1—50	150	16180	04*)	500
04484	22*)	500	16185	1—50	200
04621	1—50	150	16731	25*)	500
05050	1—50	200	17205	07*)	1000
05217	20*)	500	17212	30*)	500
05279	09*)	1000	17282	1—50	200
05664	42*)	500	17547	32*)	500
05674	1—50	150	17640	23*)	500
05874	1—50	200	17987	1—50	150
05910	15*)	500	18004	17*)	1000
05933	13*)	500	18075	29*)	500
05966	1—50	150	18100	1—50	150
06059	39*)	500	18155	23*)	500
06079	47*)	500	18438	1—50	150
06150	05*)	500	18532	1—50	200
06257	1—50	200	18720	1—50	150
07036	31*)	500	19022	48*)	500
07126	1—50	200	19345	45*)	500
07415	25*)	500	19433	1—50	150
07619	26*)	1000	19475	23*)	500
07666	30*)	500	19523	32*)	500
07852	13*)	500	19593	31*)	500
07982	1—50	150	19697	29*)	500
07999	1—50	150	19915	1—50	150

*) Çак çерири ытти 49 облигаци кашни 150-шер тенкĕ выљаса илнĕ.

Ответлă редактор ĕçĕсене тăвакан И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Академи театрĕнче
Февралĕн 26-мĕшĕнче
Вырăсла спектакљ
А. Н. ОСТРОВСКИЙ.
„Бес вины виноватые"
(4 пайлă)
Режиççор С. С. Марґагин лартат.
Талон №-120. Абонемент №-2, талон №-6

„Чăваш коммунĕ" çырăнса илмелли хакĕсем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—[illegible] т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Кăçырăксене кайала памаççĕ.
Уполномоченный Чувашглавлита № 59 Гор. Чебоксары. Типографи № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № [illegible]. Тираж 15.500 [illegible]